ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

9 (4371) №, 2014, пуш, 6 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ПУЛТАРУЛЛИСЕМ

## Асамлăх тĕнчин ытамĕнче

Культура çулталăкĕ вăй илсе пырать. Унта хутшăнса Элпуç вăтам шкул вĕренекенĕсем чăннипех те сулмаклă утăмсем тăваççĕ. «Эльен» ушкăн хăйĕн пултарулăхĕпе тăтăшах паллаштарать. Нӳшкасси, Элпуç, Çĕнçырма, Ураскасси, Пуянкасси тата ытти чылай ялта пурăнакансем çамрăк артистсен юрри-ташшине, вăйăи-куллине пĕрре çеç мар курса савăннă та ĕнтĕ.



Куракансем Николай Айзманăн «Кай, кай Ивана» камитне уйрăмах кăмăлласа йышăнаççĕ.

Шкулти кашни кружока (вĕсем 23 таран!) вĕренекенсем кăмăлпа, хавхаланулла туйăмпа çӳреççĕ. Тавра курăмне, ăсталăхне туптаççĕ, ăс-хакăла пуянлатаççĕ кружоксенче.

Куракансем спектакль вĕçленнĕ хыççăн ура çине тăрса чылай вăхăт алă çупнине, сцена çине татах та тухма ыйтнине нихăçан та манас çук пулĕ «Эльен» ушкăн артисчĕсем!

«Пирĕн, чăвашсен, ĕлĕкхи йăла-йĕркене сыхласа хăвармалла, чăвашлăха пĕтермелле мар. Куçпа курни нумайлăха асра юлать. Кунта театр пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк. Çакна, унăн пĕлтерĕшне çамрăк артистсем ăнланни питех те савăнтарать. Вĕсемпе ĕçлеме те кăмăллă», – тет драма кружок ертӳçи Николай Степанович Васильев вĕрентекен.

Анжелика Никифорова, Володя Буров, Саша Никифоров, Андрей Максимов хăйсен ролĕсене чăн-чăн артистран пĕрре те кая мар выляççĕ. Валентина Шабалина айван Паша сăнарне епле калăплама пĕлнĕ-ши тата? Куракансем ахăлтатса кулни савăнтарать ăна. Вăтанмасăр, чуна парса вылять маттурскер. Инесса Петрова, Настя Семенова, Владислав Воеводовпа Толя Алексеев та хăйсене сцена çинче тытма пĕлеççĕ. Апла тăк вĕсем кружока юратса çӳренин, унта артист ăсталăхне çине тăрсах алла илме тăрăшнин усси пурах. Пĕр тăван Ольăпа Миша Ивановсене те ырăпа кăна палăртса хăвармалла. Турă панă талант пурах кашни артистра!

...Паян та уроксем хыççăн «Эльен» яшĕсемпе хĕрĕсем драма кружокне васкарĕç. Вĕсем сцена çинче еплерех утмаллине, куракан аванрах илттĕр тесен сăмахсене мĕнлерех пусăмпа каламаллине, хусканусем вырăнлă та килĕшӳллĕ пулмаллине тепĕр хутчен аса илчĕç. Репетици пуçланчĕ. Çак самантра шкул та шкул мар тейĕн. Вăл театра çаврăнчĕ тесен те йăнăш пулмĕ. Шкулта çамрăк та пултаруллă артистсен черетлĕ занятийĕ пырать. Ăнăçу çеç сунар талантсене.

***Елена ГАВРИЛОВА, вĕрентекен.***

**Николай ВАСИЛЬЕВ сăн ӳкерчĕкĕнче**: çамрăк артистсем черетлĕ спектакль хыççăн.

Тăвай районĕ,
Элпуç вăтам шкулĕ.

***(Шкул пурнăçĕ пирки çырнă материалсемпе 6-7-мĕш страницăсенче паллашма пултаратăр).***

## Пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен – малтанхи хакпа

***Хисеплĕ вулакансем! "Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ***

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | ÇЫРĂНТАРУ ХАКĔСЕМ | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| Хыпар | 54800 | 460-86 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 78353 | 218-22 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 272-22 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 243-18 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 130-98 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 122-70 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 226-62 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | 43887 | 102-90 | 84 | 84 | 61-20 |
| Тăван Атăл | 11529 | 251-76 | 216 | 216 | 168 |
| Капкăн | 24608 | 122-10 | 105 | 105 | 87 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 83429 | 127-92 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 220-08 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 54847 | 695-88 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 192-18 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 155-64 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 119-58 | 111 | 111 | 90 |


### Паянхи кăларăмра:

**2 стр.**  Çĕнĕ конкурс: хутшăнăр, çĕнтерĕр!

**3 стр.**  Тимĕр шапа... Мĕншĕн çапла калаççĕ ăна?

**9 стр.**  Тĕнчипе чапа тухнă чăваш балерини

# Тĕрлĕрен – тĕплĕн

КОНКУРС!

## Сумлă юбилей ячĕпе – конкурс



"Пĕлетĕр-и, мĕнле ÇЫН пулнă вăл..."

**1961** çулхи ака уйăхĕн 12-мĕшĕнче ТАСС çын пĕрремĕш хут тĕнче уçлăхне çĕкленни пирки пĕлтернĕ. Юрий Алексеевич Гагаринăн "Кайрăмăр!" сăмахĕпе унăн 108 минутлăх вĕçевĕ наука прогресĕнче çĕнĕ тапхăр – тĕнче уçлăхне, çĕнĕлле тĕпчессе пуçланнине пĕлтернĕ. А.Г.Николаев космонавт летчикăн тăван ялĕнчи мемориал комплексĕпе "Хыпар" Издательство çурчĕ çак темăпа темиçе хут та конкурс ирттернĕ.

Халĕ "Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене çырăнса илекенсен хушшинче тепĕр тупăшу ирттересси пирки хыпарлатпăр. **"Пĕлетĕр-и, мĕнле ÇЫН пулнă вăл..."** ятлă. Ăна Юрий Гагарин çуралнăранпа кăçалхи пуш уйăхĕнче 80 çул çитнине халалланă.

**"Пĕлетĕр-и, мĕнле ÇЫН пулнă вăл..."** конкурса 14 çул тултарнисенчен пуçласа кашниех хутшăнма пултарать. Пĕрремĕш космонавтăн сумлă юбилейне халалласа çырнă сăвăсене, юрăсене, рефератсене, электрон презентацисене, кивĕ сăн ӳкерчĕксене "Хыпар" хаçат редакцийĕнче кăçалхи çу уйăхĕн пĕрремĕшĕччен çак йĕркесен авторĕ йышăнать. Конкурса çĕртме уйăхĕн малтанхи кунĕсенче пĕтĕмлетеççĕ, çĕнтерӳçĕсене Шуршăлти космонавтика музейĕнче чыслаççĕ.

*Юрий* **СТЕПАНОВ.**

*Костя* **ВАСИЛЬЕВ** (Вăрмар районĕ, Мăнçырма шкулĕ) *ӳкерчĕкĕ.*

КУРАВ

## Çăлтăр витĕр курăнакан çутă



Геннадий Айхи пултарулăхĕпе тĕплĕнрех паллашас тĕллевпе эпир, историпе филологи факультечĕн 3-мĕш курс студенчĕсем тата преподаватель, Чăваш Ен тĕп хулинчи Наци библиотекине çул тытрăмăр. Библиотека ĕçченĕсем хаваспах кĕтсе илчĕç.

Малтанах пире сайра-хутра тĕл пулакан кĕнекесен пӳлĕмне илсе кайрĕç. Алăкран кĕрсенех эпир урăх тĕнчене лекнĕн туйрăмăр. Йĕри-тавра нумай-нумай ĕмĕр урлă каçнă, халăх историйĕн пулăмĕсене курса, тӳссе ирттернипе саралнă хуплашкаллă, вырăн-вырăнĕпе страницисем çурăлканă тĕрлĕ кĕнеке. Анчах хальччен те упранса юлнă, хăйсен пуянлăхне, пĕлтерĕшне, хакне çухатман XVII ĕмĕртен пуçласа паянхи кунччен тухса тăнă оригиналлă, тĕрлĕ форматлă, алăпа çырнă е пичетленĕ тупрасем. Пӳлĕмре – аваллăх сывлăшĕ.

Кунта питĕ интереслĕ. Тĕнчери чи пĕчĕк, чĕр чун тирĕнчен тунă страницăллă е тĕлĕнмелле хулăн кĕнекесене, тен, урăх ниçта та курма тӳр килмĕ?

Сайра тĕл пулакан кĕнекесен пӳлĕмĕнчи хăйне евĕрлĕ экспонатсемпе сыв пуллашса эпир майĕпен Геннадий Айхи портречĕсемпе, кĕнекисемпе тулнă çутă та таса пӳлĕме кĕрсе вырнаçрăмăр. Наци библиотекинче ĕçлекенсем пире Айхи пурнăçĕпе, кун-çулĕпе, Патăрьелĕн маттур сăвăçин кĕнекисемпе, хайлавĕсене тĕрлĕ чĕлхене куçарнă тĕслĕхсемпе паллаштарчĕç.

Эпир çыравçă кĕнекисене, унăн хайлавĕсем тăрăх йĕркеленĕ иллюстрацисене хамăр алăра тытса куртăмăр. Геннадий Айхи хăй тата унăн сăввисене ытти çынсем илемлĕн вуланине компьютер пулăшăвĕпе итлерĕмĕр. Уява килнĕ шкул ачисем сăвăçăн хайлавĕсене шăрантарнипе килентĕмĕр.

Г.Н. Айхи кĕнекисен куравĕнче тата тепĕр курăмлă ĕç пулчĕ. Мария Стрекоз поэт сăввисем тăрăх графика ӳкерчĕкĕсем туса уйрăм кĕнеке пичетлесе кăларнă. Вăл «Творческие точки Вселенной» ятлă. Çамрăк автор хăйĕн кĕнекине библиотекăна парнелерĕ.

Курав пирĕншĕн кăсăклă иртрĕ. Эпир нумай çĕнĕ хыпар пĕлтĕмĕр, нихăçан тĕл пулман кĕнекесене тытса куртăмăр. Г.Н. Айхин сумлă ĕçĕсем яланах пирĕн асра пулĕç, сасси чĕрене хумхантарĕ.

*Кристина* **ВАСИЛЬЕВА,**
**ЧППУн 3-мĕш курс студенчĕ.**

СПОРТ

## Хĕрлĕ Чутайсем – пĕрремĕш!

*2013 çулхи юпа - 2014 çулхи пуш уйăхĕсенче республикăра çамрăксен хушшинче Шкул волейболĕн лигин IV Чемпионачĕ пырать. Вăл Чăваш Енре тăваттăмĕш хут иртет. Мероприятисене Чăваш Республикин Спорт тата Вĕренӳ министерствисем, волейбол федерацийĕ йĕркеленĕ.*

Иртнĕ уйăх вĕçĕнче пирĕн районти «Хастар» физкультурăпа спорт комплексĕнче хĕрсем хушшинчи Чемпионатăн зонăри малтанхи вăйăсем иртрĕç. Ăмăртусене виçĕ команда – Çĕмĕрлерен, Шупашкартан тата пирĕн районтан – хутшăнчĕ. Вăйăсене физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Иннокентий Кошкин (тĕп судья), «Хастар» физкультурăпа спорт комплексĕн директорĕ Вячеслав Дадюков, администрацин культура, спорт тата архив ĕçĕсен пайне ертсе пыракан Алексей Никитин хакларĕç.

Турнирăн тĕп судйи муниципаллă тапхăрта çĕнтернĕ командăсене волейбол тупмĕпе тивĕçтерчĕ, вăйăсен расписанийĕпе паллаштарчĕ. Унтан командăсем пĕрпĕрине тупăшрĕç.

Хĕрлĕ Чутай районĕн Мăн Этмен вăтам шкулĕн волейболисчĕсем мала тухрĕç (тренерĕ – Владимир Валерьянович Кукушкин). Чемпионат çĕнтерӳçисене чысланă çĕре Хĕрлĕ Чутай район администрацийĕн пуçлăхĕ Александр Башкиров та хутшăнчĕ. Вăл çĕнтерӳçĕсене саламларĕ, кăсăклă вăйăшăн тав турĕ, малашне волейбол çамрăксем хушшинче тата анлăрах сарăласса шаннине пĕлтерчĕ.

Пирĕн шкул команди вунă çынран тăрать: Ирина Афанасьева – капитан, Аня Мерзлайкина, Алена Ястребова, Настя Ельмова, Настя Ильина, Татьяна Граченова, Ольга Кондратьева, Виолетта Морозова, Марина Селянкина, Кристина Мерзлайкина. Вĕсем пиллĕкмĕш класранпах волейболла выляççĕ. Ирина çак шкула çиччĕмĕш класра кăна куçнă, ăна кунта килсенех капитана суйланă.



Ку вăл – хастар хĕр ачасен пĕрремĕш çĕнтерĕвĕ мар. Пĕлтĕр вĕсем Етĕрне районĕнче те, Çĕмĕрлере те выляса мала тухнă. «Эпир хамăр вĕрентекене, тренера пысăк тав сăмахĕ калатпăр, – теççĕ пурте. – Вăл пире мĕн пĕчĕкренех выляма, пĕр-пĕрне пулăшма вĕрентет».

Владимир Валерьянович Кукушкин Мăн Этмен шкулĕнче физкультурăпа пурнăç хăрушсăрлăхĕн никĕсне вĕрентет. Ку тивĕçе вăтăр ултă çул пурнăçлать ĕнтĕ вăл. «Ачасем питĕ маттур, тăрăшуллă, командăра пĕрлĕх пурри мана питĕ савăнтарать», – тет Владимир Валерьянович.

*Анна* **МИХЕЕВА.**
Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Мăн Этмен шкулĕ.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин автономи учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● АДРЕС
428019, Чăваш Республики, Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13, VII хут.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
А.ЛЕОНТЬЕВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
А.ТОРГОВЦЕВ

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
2327 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 806
Пичете пуш уйăхĕн 5-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

ЧР ПУÇЛĂХĔН СТИПЕНДИАЧĔ

# Илья калани – пуриншĕн те саккун



*Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк шкулĕн вун пĕрмĕш класĕнчи Илья Чернова пĕрле вĕренекенсемпе педагогсем кăна мар, пĕтĕм ял-йыш хисеплет. Ырă кăмăллăскер кирек кама та, кирек хăш вăхăтра та пулăшать çав. Уйрăмах кинемейсемпе мучисемшĕн чунĕ ыратать унăн. «Çăмăл мар аслисене, хам ялта чух вĕсене тимлĕхсĕр хăвармастăпах», – тет хастар яш çирĕппĕн. Акă учитель пенсионерсем, Петр Алексеевич Печковпа Венера Петровна Кассирова, маттур йĕкĕте район хаçачĕ урлă пысăк тав сăмахĕ каланă. «...Пурте Илья пек чунлă пулсан-и? Пурнăçри мĕн пур ырлăха эпир ăна сунатпăр, ашшĕ-амăшĕн пилĕпе çитĕнекенскерĕн ĕмĕчĕсем пурнăçлансах пыччăр», – тенĕ  пысăках мар заметкăра.*

## Сывлăх – чи хаклă пуянлăх

Мĕн пĕчĕкрен чирпе аптăранă Илья. Час-час больницăра сипленме тивнĕренех уроксене сиктернĕ, çавна пула юлташĕсемпе пĕр тан ниепле те ĕлкĕрсе пыма май килмен унăн. Пĕррехинче паллă çыравçăн Иван Лисаевăн «Чире парăнма çуралман» хайлавне вуласа тухсан тарăн шухăша путнă вăл.

Калаври тĕп сăнар, Витя Кулешов, туберкулез чирĕпе аптăранă. Эмел ĕçсе больницăра сипленес вырăнне вăл костыльпе шкула çӳренĕ. Пурте шелленĕ ăна, мĕнпе те пулин пулăшас тесе тăрăшнă. Анчах арçын ача хăйне шелленине юратман. Ашшĕ ăна пĕлӳ çуртне лашапа леçме тăрсан, вăл хирĕçленĕ. Ачасем вара тусĕ куриччен çул çинчи юра утма çăмăл пултăр тесе таптаса пирчентерсе пынă. «Çыннăн çирĕп чун-чĕреллĕ пулмалла, йывăр вăхăтра пуçа усмалла мар», – тесе шав малалла çутă ĕмĕтсемпе пурăннă Витя. Пĕрремĕш класранпа чирлеме тытăннăскер, вуннăмĕш класс пĕтериччен костылĕсене пăрахăçлать.

– Манăн та Витя Кулешов пек ура çине çирĕппĕн тăмалла. Ах, капла пĕтрĕм тесе ларнипе ним те пулмасть. Хама алла илсе чирпе кĕрешмеллех, ăна çĕнтермеллех! Сывлăх чи хаклă пуянлăх пулнине питĕ лайăх пĕлетĕп эпĕ, – тенĕ хăй ăшĕнче çавăн чухне Илья Чернов.

Чăн та, хăй сăмахне çилпе вĕçтермен вăл. Спортпа туслашнă. Никам хистемесĕрех. Кăшт вăхăт иртсен ыратни самайланнине сиснĕ вăл. Кайран чиртен йăлтах хăпнă, больницăна çӳреме те пăрахнă.

Паян вăл чăн-чăн спортсмен. Ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен секцине çӳрет, спорт мастерĕн нормативне те пурнăçланă. Çитĕнĕвĕсем те курăмлă. Хоккейла выляма та ăста. Спортăн ку енĕпе вăл виçĕ çул каялла çеç туслашнă. Апла пулин те вĕсен ушкăнĕ районта кăна мар, республика шайĕнче те хастарлăхĕпе палăрнă.  Мускава та çитме тӳр килнĕ ун хыççăн Елчĕксен.

– Лайăх хапхаçă вăл, хирĕç ыткăнса килекен шайбăна самантрах тытса чарма пултарать. Маттур юлташ кăна мар, хастар спортсмен та, – теççĕ ун пирки юлташĕсем мăнаçланса.

## Пурте ырă сунаççĕ йĕкĕте

Вун пĕрмĕш класра вĕренекен Ильян халĕ пушă вăхăчĕ сахалтарах. Патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменĕсене тăрăшса хатĕрленет.

– Тĕллевĕм пысăк ĕнтĕ, нимĕн те калаймăн. Çар çынни пулас килет. Кун пирки тахçанах ĕмĕтленетĕп. Çавна май тăтăш офицерсем çинчен кĕнеке вулаттăм, вăрçă çинчен те кино пăхма кăмăллаттăм. Паян та çар çыннине курсан чĕре пĕçерсе каять. Эх, Турри пулăшсан, хам тăрăшсан йăлтах йĕркеллĕ пулĕ-ха. Паянхи хăш-пĕр çамрăкран тĕлĕнетĕп. Хĕсмете каяс мар тесе тем тума хатĕр вĕсем. Мĕнрен хăраççĕ? Камран? Ĕлĕк каччăсем çирĕм пилĕк çул çарта пулнă. Ашшĕ-амăшĕ, тăван-пĕтенĕ, мăшăрĕсем пыл çулĕпе кайса çу çулĕпе таврăнма пил панă. Чăтнă салтаксем, никам та нăйкăшман. Хăйсен тивĕçне тӳррĕн пурнăçланăскерсем тăван тăрăха тулли кăмăлпа таврăннă. Халĕ урăх самана. Çар çыннин аттине тăхăнса салтак пăттине те нумаях çимелле мар. Пĕр çул çеç тăван килтен аякра пулăн. Тĕрĕссипе, тунсăхламалăх вăхăчĕ те çук вĕт! Апла пулсан мĕншĕн турткалашмалла яшсен? – тет Илья чун ыратăвне пĕрле пайланă май ассăн сывласа.

– Шкулта çирĕм çичĕ çул ачасене чăваш чĕлхипе литературине вĕрентетĕп. Анчах, пĕлетĕр-и, ӳстерсе те суеçтерсе те каламастăп, Илья Чернов пек маттур ача çак таранччен курман эпĕ.  Панă сăмаха нихăçан та çилпе вĕçтермест, темле сăлтав сиксе тухсан та, пур пĕр пурнăçлать. Курнăçланма, вĕçкĕнленме пĕрре те юратмасть. Пиренĕшĕн вăл чаплă ертӳçĕ. Кирек ăçта та йĕрке тума пултарать. Чи савăнăçли, кăмăла çĕклекенни – ун сăмахĕнчен никам та иртменни. Вăл мĕн калани пуриншĕн те саккун. Юлташĕсен хушшинче авторитет. Паянхи пек ас тăватăп, пиллĕкмĕш класра Тимур юхăмне йĕркелесе ятăмăр. Пур те пĕр канашлă пулса ертӳçĕ пулма Ильяна суйларăмăр. Ах, ватти-вĕтти те арçын ачан пултарулăхĕпе çаврăнăлухĕнчен тĕлĕнсе çеç тăратчĕ. Унтанпа вăхăт чылай иртрĕ, апла пулин те пирĕн Илья унчченхиллех ырă кăмăллă. Малашне те унра ыррине çеç курасса шансах тăратпăр. Пурнăçра ăна чĕререн сывлăх сунатпăр. Вăл мĕн ĕмĕтленни пурнăça кĕтĕрччĕ, – тет класс ертӳçи Надежда Зиновьевна Хушкина хăйĕн вĕренекенĕ пирки лайăххине кăна палăртса.

Ача чухне чылай вăхăт чир-чĕрпе асапланнă йĕкĕт пурне те сывă пурнăç йĕркипе пурăнма хистет.

– Спорт вăй-хала çирĕплетнисĕр пуçне чир-чире парăнтарма пултарать. Кăна эпĕ хам питĕ лайăх пĕлетĕп. Манăн пысăк çын пулса нумай укçа-тенкĕ ĕçлесе илес килет. Çав нухратпа хамăр ялта спорт комплексĕ çĕклесе лартнă пулăттăм. Ан тив, ватти-вĕтти, çамрăкки çав вырăнтан тухмасăр сывлăхне çирĕплеттĕр, – тет Илья Чернов хăй шухăшĕсемпе паллаштарнă май.

***Луиза ВАСИЛЬЕВА*.**

ЧР, Елчĕк районĕ,
Аслă Елчĕк.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

ПИРĔН ТАНТĂШ

# Манăн тус – тимĕр шапа

Чĕр чунсене юратакан Катьăн тахçанах тимĕр шапана мĕншĕн тимĕрпе танлаштарнине пĕлес шухăш пулнă. Тата ăна алла та тытса курас килнĕ. Анчах хăйĕн ĕмĕчĕ пирки никама та каламан вăл. Именнĕ. Тепĕр чухне тимĕр шапа çинчен çырнă кĕнекене алла илнĕ, унти ӳкерчĕксене хавас кăмăлпа пăхса ларнă.

Иртнĕ çул вара ăна çуралнă кунра нумайăшĕ парне вырăнне укçа панă.

– Хитре кĕпе туянасшăнччĕ, анчах шиклентĕм. Катя темле тĕс юратать-ха тесе алла илнĕ кĕпене каялла хутăм, – тенĕ пĕри енчĕкĕнчен нухрат кăларса хĕр ача енне тăснă май.

– Хам та çавăн пек шухăшларăм çав. Тăхăнмалли парнеличчен укçа парсан лайăхрах пулать терĕм, – калаçăва хутшăннă тепри те.

Чăн та, Катьăн вăл кунхине чылаях укçа пуçтарăннă. Амăшĕ хĕрĕ çине йăл кулса пăхнă.

– Пухăннă нухратпа мĕн илес тетĕн? Пукане-и? – кăсăкланнă хайхискер  çав самантрах.

– Анне, эпĕ текех пĕчĕк мар. Çавăнпа урăхран мана тетте кирлĕ мар. Тимĕр шапа туянас килет те... – палăртнă хăй шухăшне хĕр ача çав самантрах.

Амăшĕ хĕрĕн кăмăлне хирĕç каяс темен, иккĕшĕ те пĕр шухăшлă пулса тепĕр куннех пасара тухса утнă. Пĕрре кăна мар, икĕ тимĕр шапа туяннă вĕсем. Çав тери хĕпĕртенĕ хĕр ача юратнă çыннине тав тунă.

Урокра та тимĕр шапасем пиркиех шухăшланă Катя. «Тунсăх вĕсемсĕр. Ах, ирхине парса хăварнă апачĕ пĕтмен-ши? Выçă пурăнасран хăратăп. Хырăм выççи вылямалли япала мар-çке. Хамăн та ав кăнтăрла çитсенех мĕн те пулин ас тивес килет вĕт-ха. Пĕрле вĕренекенсемпе столовăйне васкатпăр», – тенĕ пăшăрханса.



Пĕр кунхине амăшĕ ĕçрен килсен Катя калаçу пуçарнă.

– Анне, юратнă тусăмсемшĕн питĕ тунсăхлатăп. Тен, пĕрне, аквариумĕпех шкула йăтса каймалла? Ун пек вара кашни тăхтавра тимĕр шапа патне чупнă пулăттăм. Вăл йĕркеллех пурăннине курса савăнса кăна тăрăттăм. Ан тив, пĕрле вĕренекенсем те ăна тытса юратчăр. Пирĕн шапа ун пеккине питĕ кăмăллать вĕт, – тенĕ хĕр ача хавхаланса та çунатланса.

...Паян хăйне çав тери телейлĕ туять çиччĕмĕш класра вĕренекен Катя Краснова. Унăн пĕр тимĕр шапи килте, тепри – шкулта. Килте кун-кунлаканни купăста çулçишĕн каçса каять. Тепĕр чух хĕр ача ăна юратса алла илет те, тем килĕшмест вара шапана – пӳрнинчен çыртса илет.

– Манпа çапла айкашать. Кунĕпе тунсăхлать пулас çав. Шкулти вара йăвашрах. Иккĕшĕ çĕрпе пĕлĕт пекех, анчах эпĕ вĕсене пĕрешкелех юрататăп, – тет Катя.

Пушă вăхăтра вĕтĕ шăрçапа тĕрлĕ япала эрешлеме кăмăллать хĕр ача. Шăрçана çип çине тирсе мăй çыххи, алка, сулă та пĕрре мар туса юлташĕсене парнеленĕ. Ӳкересси те ăнăçлă пулать унăн. Ытларах çут çанталăк илемне, чĕр чунсене шурă хут çине куçарать.

Юрă-кĕвĕ те уншăн ют мар. Çавăнпа музыка шкулне хаваспа çӳрет вĕренӳ отличници. Спортра та хастар. Футболла та кăмăлтанах вылять.

– Çулла та уçă сывлăшрах эпир. Урамра хаваслансах волейболла вылятпăр. Таврана каç сĕмĕ çапни пире пĕрре те кансĕрлемест. Çавăнпа та эпĕ халĕ çуллахи каникула чăтăмсăррăн кĕтетĕп, – тет Катя.

***Элиза ВАЛАНС.***

Вăрмар районĕ,
Кĕтеснер.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

# «Тантăш» – Сĕнтĕрвăрри районĕнче

**Шкулта вĕренекен кашни ача анлă тавра курăмлă пулма, пушă вăхăта усăллă ирттерме тăрăшать. Вăтам, аслă классем халех вĕренӳ заведенийĕсене кĕме хатĕрленеççĕ: уроксем хыççăн тĕрлĕ факультатива çӳреççĕ, кашни предметпа тарăн пĕлӳ илессишĕн вăхăта та, вăя та шеллемеççĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кукашни шкулĕнче те тĕрлĕ предмет кружокĕ ĕçлет. Ачасем ытларах чухне университета е института кĕнĕ чухне мĕнле предметпа экзамен тытмаллине шута илсе çав предмет çине ытларах пусăм тăваççĕ, факультатива çӳреççĕ. Унсăр пуçне хĕр ачасемпе арçын ачасем спортпа туслă пулни те палăрать. Кукашни шкулне килнĕ кун ачасем Сĕнтĕрвăррине йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне кайнине пĕлтĕм. Çак кунсенчех шкулти хĕр ачасен баскетбол команди республикăри ăмăртура медале тивĕçни ашшĕ-амăшне, учительсене савăнтарнă çеç мар, ытти ачана çитĕнӳ тума та хистет. Кукашнисем тата мĕнле ĕмĕт-тĕллевпе пурăнаççĕ? Мĕнпе интересленеççĕ? Апла тăк вĕсемпе çывăхрах паллашар мар-и?**

## Вырăс ачи чăвашла диктантсене «пиллĕклĕх» çырать

– Телевизор пачах та курмастăп. Унччен ăслăлăхпа çыхăннă передачăсене пăхаттăм-ха, "Галилео" евĕррисене. Халĕ ăна та кăтартма пăрахрĕç, çавăнпа та тĕрлĕ энциклопеди вулатăп, – тет 4-мĕш класра вĕренекен Миша Гусев.

Вăл ытларах физикăна кăмăлланине пĕлтерчĕ. Çамрăк питĕ ăслă та анлă тавра курăмлă иккен. Халех ăслăлăх кĕнекисене «шĕкĕлчет», модельсем тăвассипе интересленет. Истори урокĕсене те юратать Миша. Тен, çавăнпах археолог пуласшăн вăл: ĕлĕкхи-авалхи япаласене шыранă çĕрте ĕçлесшĕн. Ытти предметпа та тăрăшса вĕренет арçын ача, тĕрлĕ конкурса хутшăнать. Математиксен олимпиадинче вăл виççĕмĕш вырăн йышăнма пултарнă. Çамрăк тĕпчевçĕ Миша шахматла выляма та ăста. Вăл çак енĕпе ăмăртура палăрма та ĕлкĕрнĕ. Кĕçĕн классем хушшинче иртнĕ тупăшура çĕнтерӳçĕ ята тивĕçнĕ.

– Миша питĕ маттур ача, – калаçăва хутшăнчĕ класс ертӳçи Рена Николаевна Смирнова та. – Кашни кунах Кукашни шкулне Сĕнтĕрвăрринчен çӳрет, уроксенче вара тимлĕн итлесе ларать, тăрăшса вĕренет. Яланах çĕннине пĕлме тăрăшать: компьютерти тĕрлĕ программăпа усă курса кăткăс ĕçсем те ӳкерет, тусĕсем валли Интернетра хутран касса кăлармалли юр пĕрчисем шыраса тупрĕ. Миша вырăс йăхĕнчен. Арçын ачан тăван чĕлхи вырăс пулин те, вăл чăваш чĕлхине юратса та хисеплесе вĕренет. Диктантсене «пиллĕк» паллăлăх çырать.

«Икĕ чĕлхе – икĕ ăс, виçĕ чĕлхе – виçĕ ăс», – тесе ахальтен каламан çав. Вĕренсен, тăрăшсан веçех пулать!



## Поэзи тĕнчи илĕртет

Поэзие чун-чĕререн юратакансем те пур Кукашни шкулĕнче. Тăван ял урамĕсем, тăван шкул, тавралăх илемĕ Катя Короткова сăввисенче вырăн тупнă ĕнтĕ. 6-мĕш класра вĕренекен хĕр ачан çĕкленӳллĕ сăввисене вулакан кашни çыннăн куçĕ умне çуралса ӳснĕ тăван кил тухса тăрасси иккĕлентерместех. Хайлавĕсенче амăшне халалланисем те пур. Вĕсенче – юратнă çыннин сăнарĕ.



Катя ăслăлăх конференцине хутшăнмашкăн вырăс чĕлхипе литература учителĕпе пĕрле ĕç хатĕрленĕ. Сăмах май, Галина Павловна Волостригова хĕр ачан сăввисене редакцилеме пулăшать.

– Конференци çак уйăхра иртрĕ. Катьăн сăввисене ырларĕç, вĕсене пĕр-пĕр журнала ярса пама сĕнчĕç. Анчах призерсен йышне кĕреймерĕ вăл, – сăмах хушрĕ Галина Павловна.

Катьăн сăввисене унччен маларах Шупашкара шкул тулашĕнчи ĕçсен «Эткер» Центрне ярса панă, унта та хĕр ачана мухтанă. Сăвăсемсĕр пуçне 6-мĕш класра вĕренекенскер эссе, калав çырма кăмăллать, унта тĕрлĕ çивĕч ыйтăва хускатать.

– Часах республикăра сăвă вулакансем хушшинче «Живая классика» конкурс иртĕ. Унта хутшăнасшăн, – пĕлтерчĕ вырăс чĕлхипе литература вĕрентекенĕ.

Катя хăй сăвăсем çырать çеç мар, пушă вăхăтра ытти поэтсем шăрçаланисене те вулама кăмăллать. Уроксем пĕтсен вара фольклор ушкăнневаскать. Унта ачасем чăваш халăх юррисене шăрантараççĕ, ташлаççĕ. Катя фортепьянопа та калама пĕлет.

– Тĕрлĕ конкурса, предмет вăййисене хутшăнма тăрăшатăп: «Чĕвĕлти чĕкеç», «Русский медвежонок», «Кенгуру»... Пушă вăхăтра илемлĕ литература произведенийĕсене вулатăп, юлташсемпе футболла вылятăп, – сăмахне вĕçлерĕ Катя Короткова.

## Спортпа туслă Родионовсем

Пĕртăван Эдикпа Мария Родионовсем иккĕшĕ те спортпа туслă. Тăваттăмĕш класра вĕренекен арçын ача икĕ çул каялла Сĕнтĕрвăрринчи физкультурăпа спорт комплексĕнче ĕçлекен кĕрешӳ секцине çӳреме пуçланă.

– Эпĕ спорта юрататăп. Кĕрешнисĕр пуçне баскетболла выляма кăмăллатăп. Пирĕн шкулта çак енĕпе секци ĕçлет. Унта кĕçĕн класра вĕренекенсем савăнсах çӳреççĕ. Çулла вара юлташсемпе мечĕк хăвалама кăмăллатăп.

Кĕрешӳçĕсен тĕрлĕ ăмăртăвне хутшăнать Эдик. Районта та пĕрре мар малти вырăна тухма пултарнă вăл. Республика ăмăртăвĕнче те призерсен шутне кĕнĕ.

Мария вара ача садне çӳреме пуçланăранпах пиччĕшĕпе пĕрле кĕрешӳ секцине çул такăрлатать.



– Манăн спорта пăрахас шухăш нихăçан та пулман. Кĕрешме питĕ килĕшет, – тет хĕр пĕрчи.

2-мĕш класс хĕр ачи чылай ăмăртура малти вырăнсене йышăнма ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ. Унăн пухмачĕнче республика шайĕнче иртнĕ турнир Хисеп хучĕсем, Дипломĕсем, медальсем. Мария кĕрешес енĕпе Акатуй уявĕнче иртterекен ăмăртура та пĕрремĕш пулни çывăх çыннисене, пиччĕшне савăнтарнă. Нумай пулмасть «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ-2014» иртнĕ. Шкулти ăмăртура вăл финиша виççĕмĕш çитнĕ.

Мария кĕрешӳ секцийĕсĕр пуçне музыка кружокне çӳреме те вăхăт тупать.

– Халăх юррисене юрлатпăр, ташлатпăр. Эпĕ тата фортепьянопа та калатăп, – йăл кулать хĕр ача.

## Предмет олимпиадисенче çĕнтернĕ

Шкул ачин кунĕ еплерех иртет-ха?

– Çур кун пĕлӳ çуртĕнче урокра тĕрлĕ задача, хăнăхтару пурнăçласа. Ытти вара каллех çавăн пекех – киле парса янă ĕçсем хушшинче, – йăл кулать Саша Петрова. – Хăш чухне çĕрлечченех урок туса ларма тивет. Вĕрентекенсем ытлашшипех парса яраççĕ пулĕ... Çапах, мана вĕренме килĕшет. Çĕннине пĕлес килет. Çавăнпа та кашни урока тĕплĕн хатĕрленме тăрăшатăп.



Яланах вĕренсе пушă вăхăт çук пекех туйăннине пĕлтерет хĕр ача. Анчах та алла кĕнеке тытма вăхăт тупатех вăл. Ытларах наукăпа çыхăннисене шĕкĕлчеме кăмăллать Саша.

– Истори предметне питĕ юрататăп. Вĕрентекенĕн кашни урокĕ кăсăклă иртет. Тен, экзамен тытма та историе суйлăп. Унсăр пуçне хими предмечĕ те кăмăла каять. Эпĕ хими факультативне те çӳретĕп.

Кăçал вĕренӳ отличникĕ тĕрлĕ предмет олимпиадине хутшăнса шкул чысне хӳтĕленĕ. Обществознани, истори, литература, биологи предмечĕсемпе, правăпа малти вырăнсене йышăннă. Нумай пулмасть вара «Excelsior» ăслăлăх конференцийĕнче социологи предмечĕпе иккĕмĕш вырăна тивĕçнĕ, пĕрле вĕренекенĕпе геометри предмечĕпе ĕç хатĕрлесе призер пулнă.

– Уроксене ытларах хатĕрленетĕп. Кружок-секцие çӳреме те вăхăт тепĕр чухне çитмест. Ман шутпа, тăрăшса вĕренсен экзаменсене ăнăçлă тытма çăмăлрах, – шухăшне пĕлтерет 8-мĕш класра вĕренекен хĕр ача.

*Ирина КОШКИНА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

# Артист мар вăл, анчах унран та кая мар



Урок ларнине систерсе шăнкăрав янăрарĕ те, Надежда Викентьевна пысăк сумка йăтса пĕрремĕшсем патне васкарĕ. Ялан çĕннине пĕлме ăнтăлакан ачасем ăна хавассăн кĕтсе илчĕç.
– Паян, паян мĕнпе кăсăклантаратăр пире? – хавассăн ыйтрĕç вĕсем вĕрентекене сывлăх суннă хыççăн. Ырă кăмăллă педагог тĕрлĕ кĕлетке тетте кăларса сĕтел çине хучĕ.
– Калаçу чĕр чунсем пирки пулĕ. Малтанлăха хамăр тăрăхрисемпе паллашар-ха, – тесе теттесене кашнине тытма ирĕк пачĕ.

## Тилĕ те урокрах юласшăн

Эй, пусланчĕ тĕркешÿ! Ачасем хаваспах вĕсене йăвалама тытăнчĕç. Алли-урисене, сăмси-хăлхине, куçне-пуçне – йăлт тытса пăхрĕç. Ак вăйă пусланчĕ те.
– Мулкач ăçта пурăнать?
– Вăрманта.
– Вăрманĕ ăçта?
– Ял сывăхĕнче.
...Хĕрĕх пилĕк минут епле иртнине сиссе те юлаймарĕç ачасем. Урок тухнине систерсе шăнкăрав янăрасан пĕчĕккисерсем кăмăлсăрланчĕç.
– Вăхăтсăр шăнкăравне пачĕç, – тесе теттесене каялла пуçтарма тытăнчĕç.
Сасартăк пĕр арçын ача:
– Ай, тилĕ çук пирĕн! Тилĕ çук! – кăшкăрса ячĕ вăл.
Тытăнчĕç ăна пурте шырама. Ак, парта айне кĕрсе ÿкнĕскере самантрах туртса кăларчĕç.
– Надежда Викентьевна, куратăр-и, тилĕ те каясшăн мар. Эпир кăна мар, вăл та сирĕн урока кăмăллать, – терĕç хĕпĕртесе.
...Пĕчĕккисем те питĕ юратаççĕ çав хастар педагога. Унран уйрăласшăн мар.
– Ачасене кĕнекепе çеç вĕрентни çителĕксĕр. Ÿкерчĕке тĕллесе: «Ак кашкăр, тепри мулкач, юнашарри упа», – теес килмест. Капла йăлтах типĕ. Никама та кăсăклă мар. Вĕсене чĕрĕлĕх кирлĕ! Чĕрĕлĕх! Çавăнпа урока теттесем илсе килетĕп. Ан тив, кашниех вĕсене тытса, çупăрласа, кирлĕ пулсан çыртса та пăхтăр. Çакă вĕсене пушшех вĕренме хавхалантарать вĕт! Теттесемпе тĕрлĕ вăйă вылятпăр. Вĕсем – чăннипех ăс-тăна анлăлатмалли мелсенчен чи пахи те курăмли, – тет Надежда Викентьевна.
Хастар педагога хăйĕн ĕçĕ питĕ килĕшет. Паян ав уроксем хыççăн сĕтел хушшинчех тарăн шухăша путрĕ. Самантрах ачалăхĕ куçĕ умне тухрĕ.

## Сцена çинче те математика кирлĕ!

Виççĕмĕш класра вĕренекен хĕр ачан питĕ балерина пулас килнĕ. Хăйĕн ĕмĕчĕ пирки амăшне кашни кунах аса илтернĕ.
– Балет ăстисене Пермьри хореографи училищинче хатĕрлеççĕ тет. Анне, хулана вĕренме яратăн-и? Кайран Чăваш Енри Надежда Павлова пек чаплă балерина пулăп. Маншăн эсĕ те савăнса çеç тăрăн ун чухне, – анратнă часчас юратнă çынни çумне куршанак пек çыпçăнса.



Нимĕнле хурав илтеймен çинçешке хĕр ача пур пĕрех çунатланса пурăннă. Килте никам та çук чухне урисене бинтпа чĕркесе, чĕрне вĕççĕн тăрса тĕкĕр умĕнче акăш евĕр ташланă. Пĕр кунхине вĕсем патне Шупашкарта пурăнакан Улька аппăшĕ килнĕ.
– Надя тăнран кăларать. Балерина пулатăп тет. Илсе кайса кил-ха ăна, тархасшăн, Пермь хулине, – тенĕ амăшĕ килнĕ хăнана.
Каç çĕрĕпе куç хупайман хĕр ача. «Вĕренме кĕретĕпех. Паллă çын пулса тăрăп», – ĕмĕтленнĕ çав-çавах. Тепĕр кунне ир-ирех вĕсем хулана тухса кайнă. Темле пысăк çурта кĕрсен Улька аппăшĕ коридорти сак çине лартса хăварнă ăна. Хăй хыпаланса пÿлĕме кĕрсе кайнă. Нумай тăман унта вăл, каялла васкаса тухнă.
– Надя, директорпа калаçрăм. Балет ăстисене виçĕ çултанпах кунта йышăнаççĕ иккен. Эпир халĕ кая юлнă, эсĕ ĕнтĕ виççĕмĕш класра ăс пухатăн, – пăшăрханса калаçнă хайхискер.
Ку хыпар уяр кунта аçа çапнă пекех пулнă уншăн. Капланса килнĕ куççульне аран тытса чарнă. Тĕрĕссипе, аппăшĕ ăна Пермь хулине мар, Шупашкара çеç илсе кайнă. Лăплантарас тĕллевпе.
Пиллĕкмĕш класра вĕреннĕ чухне унра артист пулас ĕмĕт çуралнă. Телевизорпа концерт кăтартнă чух хăй евĕрлĕ çын шыранă. Пур пĕрех тупнă та ун çине кăмăлтан пăхса ларнă. «Хама хам айккинчен сăнаса ларма лайăх çав», – тесе хĕпĕртенĕ.
Хĕр ача артистка пулас ĕмĕтлине пĕтĕм шкул пĕлнĕ. Пĕррехинче математика урокĕнче ăна Василий Васильевич Васильев вĕрентекен доска умне кăларнă. Йывăр задачăн хуравне час тупаймасăр хăшкăлаканскере самантрах кăмăлне пăснă.
– Кĕрсе лар-ха парта хушшине! «3» паллă сана! Çапах хăв артистка пуласшăн тапăлтататăн. Мĕн, артистсен математикăна пĕлмесен те юрать тетĕн-им? Э, çук, йăнăшатăн. Сцена çинче те виçĕ утăм малалла, çичĕ утăм хыçалалла тăвас тесен те пуça лайăх ĕçлеттермелле, – тенĕ сассине кăшт хăпартса.

## Кăвак хуппи уçăлсан...

Сыв пуллашу каçĕ иртсен, тепĕр кунхинех Надежда пысăк шанчăкпа Чăваш патшалăх драма театрне çул тытнă. Пĕррехинче ăна кун ăнăçнă иртнĕ. Юрра-ташша ăстаскер «Артист ăсталăхĕ» конкурс витĕр çăмăллăнах тухнă. Тепĕр кунхине ăна жюри членĕсем кăвакарчăна евĕрлеме ыйтнă. Йăлт çухалса кайнă пике. «Кăвакарчă-ă-ăн? Ку сăмаха пурнăçра пĕрремĕш хут илтетĕп. Мĕн япали-ши вăл тата? Кăркка е хур-ши?» – шухăшланă пăшăрханса. Çапла пĕли-пĕлми авкаланса этюд тунă вăл. Шел, унăн хусканăвĕ жюрисен кăмăлне кайман. Кайран кăвакарчăн мĕне пĕлтернине ыйтса пĕлсен çав тери куляннă. «Пирĕн тăрăхра ăна кулюкка теççĕ. Тавçăрнă пулсан-и? Мăнтăр кăвакарчăна евĕрлесе кăтартасси маншăн ним те марччĕ. Мĕншĕн çак сăмах пĕлтерĕшне ун чухнех ыйтмарăм-ши? Эх, ял ачисен хăюлăх çук çав», – чунтан куляннă Вăрмар пики.
– Ăсталăху пысăк, çавăнпа пĕчĕкрех рольсене выляма, массăллă сценăсенче ташлама кунтах юлма пултаратăн. Пилĕк çул ăсталăхна туптанă хыççăн сана Мускава ярăпăр. Тепĕр пилĕк çултан чăваш тăрăхне чăн-чăн артист пулса таврăнăн, – калаçу пуçарнă унпа драма театрĕн ĕçченĕсем.
Тарăн шухăша путнă Надя. «Чимха, капла манăн вунă çул иртсе каять. Унччен вăхăта сая ярас çуках. Урăх çĕре çул тытмалла», – тесе тĕллев лартнă.
...Канашри педагогика училищинче физкультура уйрăмĕнче ăс пухма тытăннă вăл. Унччченех спорта чунтан юратнă пике кунта та хастарлăхĕпе палăрнă. Вăй-хал тапса тăнă унра. Ларма-тăма пĕлменскер тĕрлĕ уявра пурне те тĕлĕнтернĕ. «Студентсен çуркунни» фестивальте вăл Константин Иванов çырнă поэмăри тĕп сăнара Нарспие калăпланă. Унти йĕркесене чуна пырса тивмелле вулანă май сцена çинчех чĕркуçленсе ларса куççуль кăларнă, куракан чунне тыткăнласа хăйпе пĕрле ĕсĕклеттернĕ.
– Чăн-чăн артист! Пултарать, – тăвăллăн алă çупнă куракан пĕр тĕлĕнсе те савăнса.
Вĕсен сăмахĕсем каллех çунат хушнă Вăрмар пикине. «Шел, чăн-чăн артист пулаймарăм çав. Мĕскĕн кăвакарчăн пекех тухса вĕçрĕм конкурсран», – шухăшланă хайхискер ассăн сывласа.
Çулсем сисĕнмесĕр иртнĕ. Надежда Викентьевнăна пĕр паллакан çын аслă шкула чăваш уйрăмне вĕренме кĕме сĕннĕ. Унăн ырă канашне илтсен юпа пек хытса тăнă вăл. Кăвак хуппи уçăлса кайнăнах туйăннă. «Чăнах, манăн çак çулпа каймалла та. Ку таранччен епле тавçăрса илеймен-ха эпĕ кăна?» – тенĕ хавхаланса.
Сакăр уйăх хатĕрленнĕ вăл экзаменсене. Тăрăшни, вăй хуни ахаль пулман. Вăл И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне куçăмсăр мелпе çăмăллăнах вĕренме кĕнĕ. Хыççăнах Канашри 11-мĕш шкул ачисене чăваш чĕлхипе пĕлÿ пама сехетсем уйăрса панă ăна. Ачасемпе хавхаланса ĕçленĕ вăл. Вĕсене чĕлхене юратма вĕрентнисĕр пуçне халăх йăли-йĕркине пăхăнса тĕрлĕ уявсем йĕркеленĕ.
– Акă ăçта иккен вăл чун уççи! – хавхаланнă педагог кашни кун шкула кĕмессерен.

## Кашни эфирта – тĕрлĕ шарф

Вулавăшра экзаменсене хатĕрленнĕ чухне ун патне Канаш телекуравĕн директорĕ пырса тăнă.
– Эсир юрра-ташша ăста пулнине пĕлетĕп, çавăнпа юрласа кăтартаймастăр-ши? – тенĕ вăл ун çине шатăрасла пăхса.
– Çакăнтах-и? Халех-и? – шалт тĕлĕннĕ педагог ручкине сĕтел çине хунă май.
– Йывăр мар пулсан, халех, – тенĕ лешĕ.
– Уçланкăри-и-и пала-а-ан, шап-шурă çурăлса-а-ан... – юрă сăмахĕсене кăмăлтанах шăрантарса янă хайхискер.
– Ыран ман пата ĕçе пыр-ха, – тенĕ те самантрах тухса кайнă директор.
Нимĕн те ăнланса юлайман Надежда малалла çырма тытăннă. Тепĕр кунне телекурав директорĕ ăна чăваш передачисем ертсе пыма сĕнсен, вăл каллех юпа пек хытса тăнă. Чĕри те хăвăрттăн тапма тытăннă. «Телей татăкĕ пĕлтрен татăлса анчĕ иккен. Хам умах. Ĕненес килмест», – шухăшланă çаплах тĕлĕнме пăрахаймасăр.
«Шанчăк тĕпелĕ» передача ертсе пыраканскер районти, республикăри тĕрлĕ çынпа курнăçнă. Вĕсен пултарулăхĕпе халăха паллаштарас тесе чунне парса ĕçленĕ вăл. Кашни передачи тĕрлĕ сăнарпа, тĕрлĕ шухăшпа эфира тухнă. Пĕррехинче утарта сюжет ÿкерме тытăннă хайхискерсем. Шăп çав вăхăтра пыл хурчĕсем шуйханса кайнă. Пурте аллисемпе хăлаçлансах утартан тухса тарнă. «Уй, паян хама пĕр-пĕр комедири тĕп сăнара калăпланă пекех туйрăм», – тенĕ Надежда Викентьевна ниепле те кулма чарăнаймасăр.
...Телекуравра ĕçленĕренпе 10 çул çитсен Канашри Культура керменĕнче пултарулăх каçĕ иртнĕ Надежда Викентьевна Максимова. Зал лăк тулли пулни ăна калама çук хăпартлантарнă. Палламан çынсем те сцена çине тухса чечек çыххи парнелени ăна куççульлентернĕ.
– Телекуравра вăй хуни маншăн калама çук пысăк савăнăç пулчĕ. Эх, тăхăнмалли хĕсĕкрехчĕ çав ун чухне. Кашни кăларăмра тĕрлĕ шарф уртса ярattăм та, çĕнĕ кĕпе тăхăннăнах туяттăм. Передача йĕркеленĕ май журналист та, çул çÿревçĕ те... тата артистка та пултăм! Тинех, тинех лăпланчĕ канăçсăррăн тапакан чĕрем. Ан тив, пурнăçра чăн-чăн артист пулса сцена çинче выляймарăм пулсан та, хама артистран пĕрре те кая мар тесе шухăшлатăп. Тавах атте-аннене. Вĕсене пула юратнă Чăваш Енре, юратнă ĕçре чуна парса ĕçлерĕм. Балерина пулса тăнă тăк, çак чун иленĕçе курса та, туйса та илеймен пулăттăм, – тет вăл ăш пиллĕн.
...Паян та пысăк ĕмĕтсемпе пурăнать Надежда Викентьевна. Шкулта тавра пĕлÿ музейĕ уçасшăн. Çитес вăхăтра шкул çумне пÿлĕмсем хушса тума палăртни педагога хавхалантарчĕ. Ара, ăна музей валли пĕр вырăн уйăрса пама шантарчĕç-çке!
– Тепĕр хавхалану пусланĕ вара. Чăн-чăн чăвашлăх хуçаланĕ çав пÿлĕмре. Манăн ĕлĕкхи япаласем хатĕр ĕнтĕ, вĕсене вырнаçтармалли çеç юлать. Ку тĕлĕшпе ачасен ашшĕ-амăшĕ нумай пулăшать. Вĕсем музей валли нумай япала пухрĕç. Уйрăмах Таня Лесновăн ашшĕ тăрăшрĕ, – тет ялан ĕмĕтленме юратакан хастар педагог.
...Вĕренекенсем Надежда Викентьевнăн пултарулăхĕнчен тĕлĕнсе тăраççĕ. Нумайăшĕ унран тĕслĕх илме тăрăшать. Акă улттăмĕшĕнчи вĕренÿ отличникĕ Илья Калинкин ташша ăста. Чăваш чĕлхи урокĕнче те тимлĕ. Вĕрентекенĕн кашни сăмахне ăша хывма тăрăшать.
Вăрнар тăрăхĕнче çуралса ÿснĕ Вика Ефремова та юрă-ташăсăр пурăнаймасть. Кашни уявра сцена çине тухса куракана хăпартлантарать. Шкул тулашĕнчи ĕçсен «Эткер» республика центрĕ иртнĕ «Симĕс планета» ÿкерчĕксен конкурсĕнче пĕрремĕш вырăна тухнă вăл.
Хăйĕн вĕренекенĕсем пур çĕрте те хастарлăхĕпе палăрнăран Надежда Викентьевна çав тери савăнать.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*

Канаш,
11-мĕш шкул.
**АВТОР сăн ÿкерчĕкĕсем.**

# Эпир мĕнрен кая?

**Тăвай районĕнчи Элпуç вăтам шкулĕ республикăри чылай шкул хушшинче кăтартуллисен йышĕнче. Вĕсем пуçаруçăсем те, ĕçе тирпейлĕ те тĕплĕ тăвакансем те... Нумай паха енпе палăрать Лариса Анатольевна КАБАКОВА директор ертсе пыракан шкул коллективĕ. Шкул ачасемпе илемлĕ пулнишĕн, маттур та пуçаруллă вĕренекенсем çитĕннишĕн савăнать учительсен коллективĕ те.**

**Çак кунсенче вĕсем тата тепĕр ырă ПУÇАРУ турĕç. Кăçалхи иккĕмĕш çур çултан шкулта вĕренекен кĕçĕн класри кашни ача «ТЕТТЕ» журнал, вăтаммисем «ТАНТĂШ» хаçат, аслисем «САМАНТ» журнал çырăнса илме сăмах пачĕç. Ырă пуçарăва пурнăçлама тытăнчĕç те ĕнтĕ вĕсем.**

**Апла пулсан ăнăçу кăна сунар!**

## Вулама юрататăп




Эпир çĕнĕ шкулта вĕренетпĕр. Илемлĕ те капмар çурт аякранах курăнса ларать. Пуян библиотека та пур. Унта çĕнĕ кĕнеке темĕн чухлех! Кĕнеке вулама юратнăран кунта яланах çÿретĕп. Хальхинче Елена Николаевна библиотекарь мана Валентина Тарават çырнă «Ытарайми çĕр-шыв» вуласа пăхма сĕнчĕ. Эпĕ илтĕм, унпа паллашрăм. Хуплашки те питĕ илемлĕ. Арçын ачапа хĕр ача тата кушак тавралăха кантăкран сăнаса пăхса тăраççĕ. Тин çеç кăчкă кăларнă хăва турачĕ çинче кăсăя юрă юрлать. Хуплашкине пăхсанах кĕнеке содержанийĕ мĕн çинчен пулнине тавçăрса илтĕм. Сăвăсемпе калавсене килĕштерсе вуласа тухрăм. Автор пире тăван тавралăха юратма, сыхлама, шкулта лайăх паллăсемпе кăна вĕренме калать. Сăвăсене вулама çăмăл, вĕсем юрă пекех илтĕнеççĕ. Килĕшекеннисене аннене те вуласа патăм. Вăл та кăмăлларĕ. Мана уйрăмах «Яковлев мăнукĕсем» сăвă килĕшрĕ. Унта чăвашлăха упрамалли çинчен çырнă. Ăна тăван чĕлхе кунĕнчи уявра та вулас кăмăллă-ха эпĕ.

Çак кĕнекере автор манпа тантăш Ваççук арçын ача çинчен те çырнă. Вăл ырă та ăслăскер. Вырăс ялĕнче пурăнать пулин те чăваш чĕлхине юратса вĕренет. Унпа тĕрлĕ интереслĕ пăтăрмах та пулса иртет. Хăйĕн тавçăрулăхĕпе йывăрлăхсенчен тухма май тупать. Манăн та Ваççук пек шанчăклă юлташ тупас килет.

Мана Валентина Тарават çырнă «Ытарайми çĕр-шыв» кĕнеке шкулта лайăх вĕренме хавхалантарать. Анне чĕлхи чи илемли те лайăххи пулнине ăнланма пулăшать. Чи хитре тавралăх – тăван ен. Ăна сыхламалла. Çавăнпа маншăн çак кĕнеке питех те паха.

*Алеша СЕМЕНОВ,*
*4 класс.*

## Çуркунне çитнине аса илтерекен уяв

Ăшă та хаваслă çуркунне çитсе пырать. Ăна халаллană уяв чылай. Вĕсенчен пĕрне эпир те паллă турăмăр. Аслă классенче вĕренекен хĕр упраç хутшăнчĕ унта. Тĕрлĕ конкурспа вăйăра кăтартрĕç хăйсен ăсталăхне. «Татьяна сăнĕ», «Чечек тусĕсем», «Ĕненетĕр-и эсир?» конкурссенче палăрма тăрăшрĕç. Хĕрсем куракансене çепĕç юрăсемпе тыткăнларĕç. Командăсем кашниех тĕрлĕ номинацире палăрчĕç. «Чи илемлĕ юрлакансем», «Чи ăслисем», «Чи хастаррисем», «Чи маттуррисем» çĕнтерÿçĕсем пулса тăчĕç.




**Сăн ÿкерчĕкре:** çĕнтерÿçĕсен пĕр ушкăнĕ.

## Пĕлÿ çăл кусĕ мĕн-ши вăл?



Çын мĕн чухлĕ ытларах вулать, унăн тавра курăмĕ те анлăрах пулать. Кĕнекепе туслашни вĕренÿре те пысăк çитĕнÿсем тума пулăшать.

Акă вуннăмĕш класра вĕренекен Толя Гавриловах илер. Вăл детектив тата фантастика жанрĕсемпе çырнă произведенисене кăмăллать. Саккăрмĕшĕнче пĕлÿ пухакан Вика Смирновăпа Лена Антонова вулавăша çĕнĕ кĕнекесем килнипе яланах интересленеççĕ. Тин çеç типографире «пиçсе тухнăскерсене» çийĕнчех алла илеççĕ, вуласа тухмасăр лăпланаймаççĕ. Хальтерех, акă, Вика «Кĕрхи кунсем» кĕнекепе паллашрĕ. Тăххăрмĕш класра пĕлÿ пухакан Ирина Филипповăна та тăтăшах курма пулать кунта. Кăçал унăн чăваш чĕлхипе экзамен тытма тивет. Çавна май вăл чăваш çыравçисен кĕнекисене ытларах вулама тăрăшать.

Улттăмĕш класс кĕнекепе питĕ туслă. Уйрăмах Лена Кирилловăпа Настя Моисеева. Вĕсене халап-юмах килĕшет. Кайăк-кĕшĕк, чĕр чун тĕнчине сăнлакан ÿкерчĕксемпе илемлетнĕ кĕнекесем тыткăнлаççĕ. Кĕнеке пĕлÿ çăл кусĕ пулнине кашни ача аван ăнланать. Унпа туслă пулнăранах пуль вĕсем тĕрлĕ конкурспа викторинăра яланах малти вырăнсене йышăнаççĕ.

*Е.БОРИСОВА.*

## Туслисен йышĕ

Эпир виççĕмĕш класра вĕренетпĕр. Тăххăрăн çеç пулин те, туслă та хаваслă пурăнатпăр. Лайăх вĕреннисĕр пуçне мĕн пур ĕçе хастар хутшăнма тăрăшатпăр. Наташа Нилова тата Таня Федорова вĕренÿ отличницисем яланах малта пулнине палăртмалла. Вĕсем çавăн пекех тĕрлĕ конкурсра та хастарлăх кăтартаççĕ.

Класс туслă пулни пур енлĕн палăрать. Тĕрлĕ уява пĕрле хутшăнса



ирттеретпĕр, йĕркелетпĕр. Юрра-ташша та ăста. Çавăн пекех чечексене юрататпăр. Класра хĕрĕхе яхăн тĕрлĕ чечек çитĕнет. Елена Анатольевна Леонтьева ертÿçĕ вĕсене мĕнле пăхмаллине ялан ăнлантарать. «Виççĕмĕш класа кĕрсен пĕр-пĕр чаплă оранжерейăна лекнĕнех туятăн хăвна», – теççĕ пирĕн туссем. Эпир куншăн питĕ савăнатпăр. Илеме мĕн пĕчĕкрен курма тата ăна хамăр алăсемпе тума хăнăхсан пирĕнтен лайăх çынсемех çитĕнессе шанатпăр.

*Таня ВАСИЛЬЕВА,*
*3 класс.*

## Чи маттуррисем!

Пирĕн класс шкулта чи туслисенчен пĕри. Эпир тĕрлĕ мероприятие хастар хутшăнатпăр, çирĕп пĕлÿ илессишĕн тăрăшатпăр. Кашни урока тĕплĕн хатĕрленетпĕр, йывăрлăхра пĕр-пĕрне пулăшатпăр. Тĕрлĕ кружока çÿресе ăсталăха туптатпăр, тавра курăма анлăлататпăр.

Класс ертÿçинчен, Майя Лукинична Владимировăран, ырă тĕслĕх илсе ун пек пулма ăнтăлатпăр. Вăл пире яланах пулăшать. Унпа чух-



не пĕрре те тунсăхламастăн, яланах мĕн те пулин çĕнни, халиччен пĕлменни тупма тăрăшать. Кашнине интереслентерме, чунра хĕлхем чĕртме май тупать.

Пирĕн класс тăрăшуллă та туслă çемье.

*Милана ЕФРЕМОВА,*
*5 класс.*

**Сăн ÿкерчĕкре:** пиллĕкмĕшсен туслă йышĕ.

## Юратнă кукамай

Манăн кукамай, Мария Васильевна Сорокина, утмăл çулта. Унăн пит-куçĕнче яланах кулă йăлкăшать. Çынсемпе те питĕ хавас вăл. Кукамай нихăçан та ахаль ларнине курман эпĕ. Картиш тулли выльăх-чĕрлĕх усрать, алса-нуски çыхать, пахча çимĕç çитĕнтерет.

Пире те пулăшма манмасть. Яланах ăшшăн кĕтсе илет, кăмăлпа ăсатса ярать. Ĕçленисĕр пуçне вăл хаçат-журнал, кĕнеке те чылай вулать. Юмах, юрă ташă нумай пĕлнĕренех пире те вĕсемпе паллаштарать. Эпир унăн мăнукĕсем – пиллĕкĕн. Пурте ун пек ĕçчен те хастар пулма тăрăшатпăр.

*Ольга ФЕДОРОВА,*
*7 класс.*

## Йĕлтĕрçĕсем ялан стартра

Шкулта тĕрлĕ спорт секцийĕ ĕçленĕренех кашни ача вĕсене çÿреме тăрăшать. Çамрăк йĕлтĕрçĕсем вара тăтăшах тренировкăсене хутшăнаççĕ.

«Раççей йĕлтĕр йĕрĕ-2014» ăмăртăва та Элпуçсем хастар хутшăнса



ырă тĕслĕх кăтартрĕç. Оля Моисеева, Ольгăпа Анжелика Никифоровсем, Миша Ивановпа Инесса Петрова, Денис Петровпа Толя Матвеев, Костя Николаевпа Владислав Воеводов малти вырăнсене тухма пултарчĕç. Медальсене тивĕçни те çамрăк спортсменсене хавхалантарчĕ, малашне татах та ăнăçлăрах ăмăртма çунат хушрĕ.

*Петр НИКИФОРОВ,*
*вĕрентекен.*

## Сутăн илме çук

«Йывăç тымарĕпе çирĕп, этем – сывлăхĕпе», – тенĕ ваттисем. Чăнах та, сывă çын çунатлă та ирĕклĕ. Унран телейлĕ çын çук та пулĕ. Йăл кулăллă сăн-питлĕ çын çине пăхма та кăмăллă.

Сывлăхлă пуласси вара йăлтах хамăртан килет. Чи малтанах кун йĕркине пăхăнмалла. Ирхине зарядка тумалла, çăвăнмалла, шăл тасатмалла. Ÿт-пĕве таса тытни те сывлăхшăн питĕ кирлĕ. Вăхăтра та кирлĕ пек апатланмалла. Рационра улма-çырла, пахча çимĕç ытларах пулмалла, мĕншĕн тесен вĕсенче организма кирлĕ витамин нумай. Шкултан таврăнсан, уроксем тума тытăниччен, уçă сывлăшпа киленсе çÿремелле. Телевизор е компьютер умĕнче нумай вăхăт ларни сывлăхшăн питех те сиенлĕ. Каçхине вăхăтра çывăрма выртмалла.

Спортпа туслă пулнине вара нимĕн те çитмест. Пирĕн çемье, сăмахран, спорта питĕ юратать. Чупма, йĕлтĕрпе ярăнма, волейболла, теннисла выляма юрататпăр. Уйрăмах йĕлтĕр спорчĕ килĕшет. Тĕрлĕ ăмăртура малти вырăнсене çĕнсе илни пĕрре çеç мар пулнă. Район центрĕнче физкультурăпа спорт комплексĕ пур. Питĕ кирлĕ япала. Çавăнпа та унта тăтăшах çÿретпĕр.

Сывлăх – чи хаклă мул. Ăна вара укçапа илме çук.

*Ольга НИКИФОРОВА,*
*6 класс.*

## Ĕмĕр пĕрле пулар

Кашниннех юлташ пур. Манăн тус – Алеша. Эпĕ унпа мĕн пĕчĕкренех туслă. Халь иксĕмĕр те çиччĕмĕш класра вĕренетпĕр. Алеша «тăваттă» тата «пиллĕк» паллăсемпе кăна ĕлкĕрсе пырать. Вăл мана кăна мар, ыттисене те йывăр вăхăтсенче пулăшма хатĕр. Алеша тĕрлĕ олимпиадăна хастар хутшăнать. Эпĕ хамăн юлташа питĕ хисеплетĕп. «Юлташ туп та, ăна упра», – тенĕ ватăсем. Çак сăмахсене асра тытса ĕмĕрех туслă пуласшăн.

*Артем МАТВЕЕВ,*
*7 класс.*

## Пулăшу

Вĕçен кайăксем – пирĕн çунатлă туссем. Хĕл кунĕсенче вĕсене уйрăмах йывăр. Выçăпа аптраççĕ. Пире класс ертÿçи Светлана Федоровна «çавра сĕтел» тавра пуçтарчĕ те вĕçен кайăксене епле пулăшмалли, мĕнле тата мĕнпе апатлантармалли çинчен ăнлантарчĕ. Сырăшсем тумалли пирки те калаçрăмăр.

Киле çитсенех çакăн çинчен аттепе аннене каласа патăм, манăн та вĕçен кайăксене пулăшас килни çинчен пĕлтертĕм. Аслисем ман шухăша ырларĕç. Аттепе иксĕмĕр сырăш турăмăр. Тепĕр кунне хатĕр



«столовăя» шкула илсе кайрăм. Çывăхри йывăç çине çакрăмăр та шурă çăкăр тĕпренчĕкĕ, хĕвел çаврăнăш вăрри хурса патăмăр. Кашни кун сăнарăмăр та савăнтăмăр: çунатлă туссем пирĕн «столовăйĕнчен» татăлма та пĕлмерĕç. Халĕ те куллен апатлантаратпăр.

Çакна палăртма та кăмăллă: эпир республикăра иртнĕ «Кайăксене пулăшар» конкурса та хутшăнтăмăр. Унта Юра Павлов, Есения Зверева, Алеша Семенов, Максим Николаев, Алеша Яковлев сырăшĕсене лайăх хак пачĕç.

Халь çуркунне çитрĕ ĕнтĕ. Эпир шăнкăрч вĕллисем ăсталас пирки те сăмах хускатрăмăр.

*Даша БОРИСОВА,*
*4 класс.*



**Сăн ÿкерчĕкре:** Алеша тата Лена Иварбеевсемпе Костя Степановпа Илья Нилов çамрăк шашистсем.

**Николай ВАСИЛЬЕВ сăн ÿкерчĕкĕсем.**

## Сивĕрен хăраса килте ларма та, чирлеме те вăхăт çук

Пирĕн шкул çумĕнче ача сачĕ ĕçлет. Унта çÿрекен çирĕм ача эрне хушшинче ăçта кăна çитмест пуль: юмах тĕнчине те, космоса та, тĕрлĕрен ют çĕр-шыва та, «Темĕн те пĕлекен» тĕнчене те, юрă-ташă ытамне те... Пĕчĕк ачасем шкулла вылянă май шутлама, алăсене çыру ĕçне хатĕрлеме, Сас палли çиекенпе тупăшса сăмах пуçтарма, юрлама, ташлама, юмах кăтартма, йывăç лартма хăнăхаççĕ, пĕтĕмпех каласа та пĕтереймĕн. Ку уйăхра эпир «Пулас салтаксем» ятпа Малышиада уçрăмăр. Унта тĕрлĕрен спорт турнирĕ ирттеретпĕр: шашкăлла, юр чăмаккипе тĕл пемелле вылятпăр, йĕлтĕрпе чупса тата çунашкапа ярăнса ăмăртатпăр. Уйăхлăха аттесемпе пĕрле ирттерекен спорт уявĕпе вĕçлетпĕр.

*Н.КОЗЛОВА.*



**Сăн ÿкерчĕкре:** Глеб Никифоров тата Даша Петрова.

## Оборонăпа массăллă ĕçсен уйăхлăхĕ

Пирĕн шкулта Оборонăпа массăллă ĕçсен уйăхлăхĕ йĕлтĕрпе чупса ăмăртассинчен пуçланчĕ. Ачасен сывлăхне çирĕплетес, патриотизмла воспитани парас енĕпе тĕрлĕ ĕçсем иртеççĕ. Шашкăпа шахматла выляса вăтам классем хушшинче çиччĕмĕшсем, аслă классем хушшинче тăххăрмĕшсем мала тухрĕç. Винтовкăран тĕл пересси пе те тупăшрĕç çĕр-шывăн пулас хÿтĕлевçисем. Кунта вара чи нумай очко пухса саккăрмĕшсемпе вуннăмĕшсем палăрчĕç. Халăх вăййисен спартакиади те çивĕч кĕрешÿре иртрĕ. Чи хастаррисем – çиччĕмĕш класра вĕренекенсем. Уйăхлăх малалла пырать. Çак вăхăтра кашни класрах паттăрлăх урокĕ ирттерме палăртнă. Çавăн пекех аслă классем йĕлтĕрпе чупса, граната ывăтса, пăшалтан персе, пирвайхи медицина пулăшăвĕ парса, кăвайт чĕртсе ăмăртĕç.

*Владислав ВОЕВОДОВ,*
*10 класс.*

## Пĕчĕк шăллăм



Манăн пĕчĕк шăллăм пур,
Пит хитре те пит маттур.
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхипе
Чĕвĕлтетет кунĕпе.

Эпĕ шкултан килессе
Чăтăмсăррăн вăл кĕтет.
Хăйĕн пĕчĕк аллипе
Ман енне кăна тĕллет.

Эпир пурте çемйипех
Юрататпăр шăллăма.
Ан чирлетĕр, ÿстĕрех –
Унăн паттăр пулмалла.

*Никита МАКСИМОВ.*

## Тăван ен

Эп çуралнă чăваш çĕрĕнче,
Ялăм манăн ялан чĕрере.
Пурăнатпăр пĕрре çĕр çинче,
Упраясчĕ тăван енĕме.
Ман тавралăх илемлĕ, хитре,
Пур унта вăрмансем, уй-хирсем.
Çырмасем, тен, нумай пулнипе
Çĕнçырма ятлă ялăм, пĕлсем.
Инçе мар-ха выртать çуталса,
Хăй патне пĕрмаях йыхăрса,
Пур иртен-çÿрене хапăллан
Эль кÿлли, ман асра эс ялан!

Эль кÿлли – таврари илемлĕ вырăнсенчен пĕри, çут çанталăк палăкĕ. 1999 çулта «Эль кÿлли – çут çанталăк палăкĕ» тесе республика шайĕнче паспорт панă. Эль кÿлли шывĕ таса, тăрă. Икĕ метр тарăнăшĕнче те тĕпĕ лайăх курăнать. Хĕвеллĕ çанталăкра кÿлĕ кăн-кăвак тĕслĕ. Ĕлĕк ваттисем ăна тĕпсĕр тенĕ. Мĕншĕн тесен унта хĕрĕх тилхепе çыхса ярсан та тĕпне çитеймен имĕш. Эль кÿлли çути – çĕрпе шыв хушшинчи тахатлă çыхăнăвăн сăнарĕ.

*Леша ИВАРБЕЕВ, 7 класс.*

# Сăвăпа чĕрем юрлать

## Çурхи салам

Акă çитрĕ çуркунне.
Саламлатăп аннене,
Йăмăка та аттене,
Шăллăма, асаннене.

Вĕçсе килчĕç кайăксем,
Ĕç пуçлаççĕ ĕçченсем:
Çавăраççĕ йăвасем,
Кăлараççĕ чĕпĕсем.

Вăранаççĕ хĕл иртсен
Пахчасемпе уй-хирсем,
Çырмасем, юхан шывсем,
Вăрмансемпе
улăхсем.

Салам, çурхи
чечексем,
Çеçпĕлсемпе
тюльпансем!
Çуркуннепе,
тăван ял,
Айтăр пĕрле
савăнар!



© *Маша КОШЕЛЕВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ÿкерчĕкĕ.*

## Юратнă асаннене

Пирĕн пур ват асанне,
Вăл пĕлет ĕçĕн майне.
Пире ăс парса тăрать,
Мăнуксемшĕн тăрăшать.

Кукăль-çăмахпа чыслать,
Йывăр пулсан ачашлать.
Ăшă сăмахсем калать,
Кăмăла савăнтарать.

Хăй çинчен, пурнăç çинчен
Пире каласа парать.
Куççулĕме пит çинчен
Шăлкалать те шăлкалать.

Хĕллехи сив каççенче
Чăлхапа алсиш çыхать.
Пĕчĕк çеç кушак çури
Çăмха кустарса вылять.

Асанне пурри пире
Чĕререн савăнтарать.
Ватă çын ыр суннипе
Пире ăнăçсах тăрать.

**Екатерина КУДРЯВЦЕВА.**
Шупашкар районĕ,
Мăнал шкулĕ.

## Килсе çитрĕ çуркунне

Килчĕ ырă çуркунне
Çанталăка ăшăтса,
Вĕçсе килчĕç кайăксем
Йăвисене çавăрма.

Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать
Икĕ çырма хушшипе.
Вăрманта кайăк юрлать
Хăйĕн хитре юррине.

Пирĕн Юлăш ялĕнче
Юр ирĕлчĕ васкаса.
Симĕс курăк çийĕнче
Шăрчăк сикет савăнса.



**Олимпиада ЕМЕЛЬЯНОВА.**
Элĕк районĕ,
Чăваш Сурăм шкулĕ.

## Анне

Манăн анне чи хитри,
Чи ырри те сăпайли.
Мухтанатăп аннепе,
Киленетĕп сăнĕпе.

Юратать вăл ĕçлеме,
Нихçан усмасть аллине.



Ташшине те
хыт ташлать,
Юррине хитре
юрлать.

Ирпе ирех
вăратать,
Пире хытă
юратать.
«Ĕçчен, маттур
пулăр», – тет,
«Тăрăшса
вĕренĕр», –
тет.

© *Юля КУЗЬМИНА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ÿкерчĕкĕ.*

## Хĕлле

Чупса тухрăм урама
Шурă юрпа выляма.
Савăнсах чупатăп эп,
Хĕллене саватăп эп.
Çуна çинчи ачасем
Вĕçтереççĕ ту çинчен.
Савăнсах пыратăп эп,
Хĕллене саватăп эп.

## Юр пике

Юр пике, юр пике,
Шурă тумлă пукане!
Урамра вăл пурăнать,
Хĕл сиввине юратать.
Тĕттĕм каçпа савăнать,
Юр çунипе киленет.
Ачасене юратать,
Пĕрле выляма чĕнет.

## Пукане

Илсе пачĕç пукане,
Ятне патăм – Кулине.
Вăл илемлĕ-çке сĕре.
Эп телейлĕ тĕнчере!

## Хĕвел

Çутă хĕвел тÿпере,
Вылять, кулать кунĕпе.
Каçпа çывăрма выртать,
Ирпе каллех вăл тăрать.
Ăшă, çутă вăл парать,
Каçчен пирĕнпе вылять.
Кунĕпе вăл савăнать,
Пире хытăн юратать.

**Аня МЫШКИНА.**
Комсомольски районĕ,
Шурут вăтам шкулĕ.



© *Анжелика ИВАНОВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ÿкерчĕкĕ.*

## Анне

Эпĕ ман анне пуртан
Питĕ савăнатăп.
Ун çинчен пур кăмăлтан
Çак сăвва çыратăп.

Вăл пĕрре çут тĕнчере,
Çÿлти хĕвел евĕрех.
Илемли те маттурри,
Пин çынран чи çывăххи.

## Кукамай

Кукамай манпа чухне
Пăхать сар хĕвел,
Питĕ ырă чĕрене,
Куç тулли телей.
Ан сÿнтĕр çепĕç йăл куллу,
Хаваслă санăн кăмăлу.
Ан юл эс пурнăç таппинчен,
Кур пархатар ачусенчен.
Малашлăхпа хавхаланса
Ялан эс пурăн савăнса!

**Ирина ЗАХАРОВА.**
Вăрнар районĕ,
Çĕрпел шкулĕ.

## Хĕвел хытă хĕртнипе

Хĕвел хытă хĕртнипе
Çывăрса каять хĕлле,
Шап-шурă çивиттине
Илсе каять хăйĕнпе.

Кулса килет çуркунне,
Ырă сунса пурне те.

Çыннисем хавхаланаççĕ,
Чĕр чунсем те савăнаççĕ.

Вăрмана тухсассăн –
Кайăк сассисем.
Уялла утсассăн –
Хура вырăнсем.

Мĕн тери илемлĕ
Çакă çуркунне!
Вăл пире парнелĕ
Ырă кăмăлне.



**Дима ИЛЬИН, 7 класс.**
Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Çĕн Атикасси шкулĕ.

## Учÿк – хур кÿлли

Пытăм Учÿк кÿллине.
Те чăнах, те тĕлĕкре
Пăхрăм эпĕ ун çине,
Куртăм хурлăхлă сăнне.

Ĕлĕк çийĕ пулнă хумлă,
Çăл куçĕсемпе пит сумлă.
Халĕ кам хуçаланать?
Пĕтĕм çын çÿп-çап тăкать.

Пăтă пĕсернĕ кÿл тавра
Учÿк тунă вăхăтра.
Ыр туррине асăнса
Тыр-пул пухнă савăнса.

Çакă Учÿк кÿллипе
Паян никам савăнмасть.
Хăйĕн сутă сăнĕпе
Хурт таврашне йыхăрмасть.

Çĕнĕ пурнăç парасса
Шанас килет туйăмпа.
Пĕтĕм çынна йыхăрса
Çĕн тум парасчĕ кăмăлпа.

Ÿсĕç ун йĕри-тавра
Симĕс, çÿллĕ йăмрасем.
Тапса тăрĕç таврара
Çутă, сивĕ çăл куçсем.

Питрав çитсен çамрăксем
Çÿрĕç кÿл йĕри-тавра.
Пысăк-пысăк пулăсем
Ишсе çÿрĕç тăр шывра.

**Станислав КОРОЛЕВ, 5 класс.**
Елчĕк районĕ,
Чăваш Тăрăм шкулĕ.

## Тăван ялăм



© *Алексей МАКСИМОВ (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ÿкерчĕкĕ.*

Тăван ялăм, савнă ялăм –
Ытарайми вырăнсем.
Хаклă ялăм, манăн ялăм –
Асран кайми тусăмсем.

Тăван кĕтес, савнă вырăн,
Ытарайми хурăнсем.
Шăнкăр шывĕ тăрă-тăрă,
Чун юратнă улăхсем.

Тăван атте, тăван анне –
Манăн савнă çыннăмсем,
Юрататăп вĕсене
Пĕтĕм чун хавалĕпе.

Чунăма эп уçса парăп
Аттепеле аннене,
Шăкăл-шăкăл çеç калаçăп
Чун каниччен вĕсемпе.

## Тĕнчере тек ан пултăрччĕ вăрçă

Тĕнчере тек ан пултăрччĕ вăрçă,
Кар тăрса вăрçа хирĕç пулар!
Кулленех хуçалантăрччĕ туслăх,
Шантарсах-çке çакна халь калар.

Тек ан хăйтăр фашист ĕмĕрне те
Çывхарма пирĕн чикĕ патне,
Йĕрес марччĕ вĕри куççульпе тек
Эпĕ, эсĕ, анне, асанне...

Кашни çын малашне пурнăçра
Тутăр хăйĕн ĕçне шикленÿсĕр.
Çамрăк çын-и е ватă – кусра
Пур пĕрех савăк кулă çеç çиçтĕр.



**Кристина НИКИФОРОВА.**
Комсомольски районĕ,
Комсомольски 1-мĕш шкулĕ.

## Пултаруллă пуласчĕ

Кала, кала, аннеçĕм,
Мĕншĕн, чиперккеçĕм,
Йăнăшсене манаймарăм?
Наяна тухса эп кайрăм?
Халь хама та паллаймарăм,
Тивĕçе пурнăçлаймарăм.
Ĕненмеççĕ тек мана...
Эх, выртасчĕ сăпкана
Виççĕри ача пекех...
Юрамасть кун пек текех!
Урăхланас килет ман,
Анчах эпĕ пит наян.
Пултаруллăрах пуласчĕ,
Ĕçе тĕплĕн пурнăçласчĕ.
Кам пулăшĕ? Кам пĕлет?
Манăн мĕн тумалла тет?..



## Лена Скворцовăна

Сана çуралнă кун ячĕпе
саламлатăп,
Телейлĕ кун-çул, ырлăх-сывлăх
сунатăп!
Пĕрмаях çавăн пек эсĕ пул,
Кăмăлтан ăшшăн-ăшшăн йăл кул!
Пĕлтĕр сана пĕрремĕш хут
куртăм,
Сăнна çавăнтах асра тытса
юлтăм.
Манас килмест сана нихăçан.
Эсĕ те мана ан ман, асра
тыт ялан!

## Сар автан

Пирĕн пĕчĕк
сар автан
Çакса янă
сараппан.
Саркаланса
утрĕ,
Шыва кĕрсе
ÿкрĕ.




**Ирина ТИМОФЕЕВА.**
Комсомольски районĕ,
Комсомольски 1-мĕш шкулĕ.

© *Валя ПЕРЕПЕЛКИНА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ÿкерчĕкĕ.*

## Чĕрĕлет тĕнче

Килчĕ çитрĕ çуркунне
Тавралăха ăшăтса.
Чĕрĕлет мĕн пур тĕнче,
Ирĕлет юр васкаса.

Сарă хĕвел тÿперен
Парнелет хăй ăшшине.
Ача-пăча кунсерен,
Ав, тухать çаран çине.

**Олеся НИКОЛАЕВА.**
Элĕк районĕ,
Чăваш Сурăм шкулĕ.

## Анне чĕлхи манăн пĕрре

Эп чăвашпа мухтанатăп,
Чун-чĕререн савăнатăп.
Чăн-чăвашлăх ман юнра,
Вăл тата пурнать чунра.

Тăван чĕлхе çепĕç, хитре,
Чи илемли вăл тĕнчере.
Чăвашлăх пулнă, пур, пулать!
Чăваш ачи йăл-йăл кулать.

Хам чĕлхерен ютшăнмастăп,
Вăтанмастăп, хăрамастăп...
Анне чĕлхи манăн пĕрре,
Ялан вăл вĕри чĕрере.

Чăвашлăх туйăмĕ пулсан,
Чĕресенче вăл пурăнсан –
Чăваш чĕлхи пулĕ ялан!
Тăван чĕлхе сÿнмĕ нихçан!

## Тăван ен – Чăваш Ен

Сулмаклă утăмпа утать
Ман Чăваш Ен малтан мала.
Асамлăхпа инçе туртать,
Ăна чунтан юратмалла.

Чăваш Енĕм ман илемлĕ,
Чечекленет, аталанать.
Вăл хăватлă, çут хĕвеллĕ,
Пĕтĕм çынна вăй-хал парать.

Тăван енĕм ырă пиллĕ,
Çыннисем ĕçчен, сăпайлă.
Сывлăшĕ таса та сиплĕ,
Савнă ен пуян, вăрманлă.

Шуçăмпалах ял вăранать,
Хĕвелпелех ĕç пуçланать.
Ĕçчен çыннăн вăйлă хăват,
Ăна вăл уй-хирте туптать.

Хаклă, çывăх ен пехилĕ
Мана вăй-хал парса тăрать.
Ман тăван юратнă килĕм
Хăй патнех-çке йыхăрать.

Манăн мăнаçлă Чăваш Ен!
Эсĕ мухтавлă тăван ен!
Эс маншăн хаклă савнă ен,
Юрататăп эп чĕререн.

**Николай АГАКОВ.**
Канаш районĕ,
Шуркасси.



© *Аня РАКОВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ÿкерчĕкĕ.*

# Надежда Павлова — Чăваш Ен мухтавĕ

*Надежда Павлова Шупашкарта çуралнă. Çемьере вăл – саккăрмĕш ача. Ачаранах ташлама юратаканскер çичĕ çул тултарсан хăй тĕллĕнех Пионер çуртĕнчи хореографи кружокне çырăннă, кĕлеткене йĕркере тытас тесе диетăна пăхăнма пуçланă. Хĕрĕ питĕ имшерленнине асăрханă ашшĕ-амăшĕ ăна тухтăр патне илсе кайсан çеç хĕр ача балет кружокне çырăннине пĕлтернĕ. Çывăх çыннисем юратнă тĕпренчĕкĕ ташăпа кăсăкланнине ырланă-ха, вăл мĕнле апатланнине вара малашне хăйсем сăнаса тăнă.*





**1966** çулта Шупашкара Пермьри хореографи училищинчен ятарлă комисси килсе çитнĕ. Пултаруллă ачасене шыраканскерсем Надьăна тӳрех асăрханă, Пермьре вĕренме сĕннĕ. Экзаменра педагогсем хĕр ачан пултарулăхĕнчен шутсăр тĕлĕннĕ: «Нимĕн те чăрмантармасан вăл иккĕмĕш Павлова пулса тăрĕ», – тенĕ.

Иккĕмĕш класран пуçласа шкул пĕтеричченех Надя Павлова Людмила Павловна Сахарова патĕнче ăсталăхне туптанă, унăн чи пултаруллă вĕренекенĕ пулса Пермь шкулне тĕнчипе палăрма пулăшнă.

М.Газиев Надя валли ятарлă номерсем хатĕрленĕ («Хĕр ача тата ахрăм», «Пĕчĕк балерина» тата «Ашкăнчăк»), вĕсемпе тăтăшах тĕрлĕрен концерта хутшăнтарнă. 1970 çулта Пермь театрĕ Мускава гастроле кайсан каллех çак пултаруллă хĕр ачана асăрханă. «Театр» журналта çапла çырнă: «Унăн пĕтĕмпех пур – сăн-пичĕ те, кĕлетки те, ăсталăхĕ те, ачалла мар пуян шалти тĕнчи те».

Вун пилĕк çулта Надежда Павлова Балетмейстерсемпе артистсен пĕтĕм союзри конкурсĕн пĕррелмĕш премийĕн лауреачĕ ятне илнĕ. Çулталăкран вара, 1973 çулта, Мускавра Балет артисчĕсен пĕтĕм тĕнчери конкурсĕн иккĕмĕш степеньлĕ Гран-прине тивĕçнĕ. Надежда Павловăпа Вячеслав Гордеева вырăс балечĕн Шанчăкĕпе Мухтавĕ тенĕ.

Çав çулсенче балерина чикĕ леш енне те тăтăшах çӳренĕ: Итали, Япони, Китай, Австри, Германи, Франци тата АПШ куракансене илемлĕ ташшипе тыткăнланă. Критиксем ăна «70-мĕш çулсенчи Пысăк театрăн çĕнĕ стильне» пуçарса яраканĕ тесе хакланă.

Пермьри пысăк çĕнтерӳ хыççăн вăл çулталăк кăна ĕçленĕ. Унтан Пысăк театра куçнă. Балеринăна килĕштерекенсем çак утăмшăн кăмăлсăрланнă. Пĕчĕк хуларан тухнă хĕр ача пысăк та хĕрхенӳсĕр Мускавра пачах та çухаласран хăранă вĕсем.

Çичĕ çул хушшинче Надежда Павлова çак спектакльсене хутшăннă: Мари (Ю.Григоровичăн «Щелкунчик»), Геро (В.Боккадорон «Юратушăн юрату»), Китри (Р.Захарова редакциленĕ «Дон Кихот»), Фригия (Ю.Григоровичăн «Спартак»), Эол (В.Васильевăн «Икар»), Валентина (Ю.Григоровичăн «Ангар»), Флорина тата Аврора (Ю.Григорович редакциленĕ «Çывăракан чиперук»), Валентина (Ю.Григоровичăн «Ангара»), Принцесса (А.Петровăн «Йывăç принц»), Сильфида (М.Фокинăн «Шопениана»).

Пултаруллă та сăпайлă балерина çинчен ĕçтешĕсем ырă сăмах кăна каланă. «Вăл ытла та лайăх», – тенĕ Майя Плисецкая. «Надежда Павлова – тĕлĕнтермĕш те паллă балерина», – çирĕплетнĕ Ролан Пети.

1984 çулта Надежда Павловăна СССР халăх артисчĕ ятне панă. ГИТИСри балетмейстер уйрăмĕнчен вĕренсе тухсан вăл педагог-репетитор пулса Францире, Германире, Японире тата Финляндире маçтăр-классем ирттерме пуçланă. 1992 çултан пуçласа 1994 çулччен – хăйĕн ячĕллĕ Балет театрĕн, 1995 çулта вара Ренессанс-балет ертӳçи.

1999 çулта Надежда Павлова Вашингтонри Раççей культура центрне уçнă çĕре хутшăннă, Донецкра «Тĕнче балечĕн çăлтăрĕ» фестиваль лауреачĕ пулса тăнă. Унсăр пуçне вăл «Кăвак кайăк» совет-американ фильмĕнче (режиссерĕ Дж. Кьюкор) тата «Сицилиан хӳтĕлевĕ» детективлă кинолентăра (режиссерĕ В.Грахов) тĕп рольте вылянă. Н.Павловăн ташши «Асаф Мессерер» документ фильмĕнче (1981, режиссерĕ Ф.Слидовкер), «Тăван çĕр-шыв хĕрĕсем» (1976, режиссерĕ Н.Орлов), «Дон Кихот» балетăн телеверсийĕнче (1978, режиссерĕ Е.Мачерет) тата Ф.Слидовкерăн Лист кĕвĕленĕ «Поэмăсем» телефильм-балетĕнче (1981) сăнланнă. Балеринăна нумай фильм халалланă, вĕсен шутĕнче: «Надя Павлова ташлать» (1973, режиссерĕ В.Баранов), «Джульетта» (1974, режиссерĕ Б.Галантер), «Çамрăксен дуэчĕ» (1977, режиссерĕ В.Граве), «Надежда Павлова» (1992, режиссерĕ С.Конончук). Игорь Васильевпа Любовь Лондон скульпторсем тата Евгений Широков, Илья Глазунов, Валерий Косоруков художниксем унăн портретне хатĕрленĕ.



Надежда Павлова – СССР халăх артисчĕ, Чăваш халăх артисчĕ, Ленин комсомолĕн премийĕн лауреачĕ, Пĕтĕм союзри тата Пĕтĕм тĕнчери конкурссемпе фестивальсен лауреачĕ, Театр искусствин Раççей академийĕн профессорĕ. Ăна Хисеп орденĕпе чысланă.

Хăйĕн пурнăçне вăл балета тата ташша халалланă. Паянхи кун та П.И. Чайковский композитор пултарулăхне кăмăллать. Ачалăхне Атăл шывĕ çинче, вĕренӳ çулĕсене Кама çывăхĕнче ирттернĕ вăл, çавăнпах анлă уй-хире юратать.

Халĕ Надежда Павлова Мускавра пурăнать.

## ПĔЛМЕ ИНТЕРЕСЛĔ

# Кушаксем те сиплеççĕ



Франци ăсчахĕсем тĕнчери кушаксен шутне пĕлнĕ: пирĕн планетăра пурĕ 400 миллион кушак! Чи нумайăи – АПШра. Апла пулсан та Австрире вĕсен хисепĕ ытларах – вунă çын пуçне тăхăр кушак. Перу, Габон тата ытти темиçе çĕр-шывра çукпа пĕрех.

Англире хура тĕслĕ кушак хисепре. Вĕсем хуçине ăнăçлăх кӳнине ĕненеççĕ акăлчансем. Куçа урпа тухсан хура çăмламасăн хӳрипе çав тĕле сĕртĕнмелле çеç, вара сывалатăн. Вăрĕ тĕслĕ кушак хӳри шĕнĕсене пĕтерет-мĕн. Çавăн пекех ачаш та çемçе çак чĕр чун этемĕн ыратакан вырăнĕ тĕлне темле майпа туйса ун патне тĕршĕнет е çавăнта выртать. Çапла вĕсем юратнă хуçине сыватаççĕ.

Японире мăр-мăр кил-çурт ăшшипе хăтлăхĕн символĕ шутланать, ахальтен мар çак çĕр-шывра вĕсен кӳлеписене кашни кил умĕнче лартаççĕ.

Раççейре çĕнĕ çурта куçнă чух чи малтан кушака кĕртсе яраççĕ.

Египет çыннисем хуçи вилсен унăн чунĕ кушака куçнине ĕненнĕ. Пушар тухсан çунакан çуртран вĕсем малтан Мăрккасене йăтса тухаççĕ, кайран çеç япалисене.

Пĕрремĕш Карл патша кушакĕ телей-ăнăçу "кайăкĕ" вырăнĕнче шутланнă. Хуçи юратнă чĕр чунĕ çумне ятарлă сыхлавçăсем тăратнă. Анчах патша кушакĕ пур пĕрех вăхăтсăр вилнĕ. Темиçе кунран хуçи те çут тĕнчерен уйрăлнă.

Александр Дюман "Виçĕ мушкетер" кĕнекинчи каварлă Ришелье кардинал хăйĕн керменĕнче вун икĕ кушак усранă. Паллă писатель Эрнест Хемингуэй патĕнче вара çĕр аллă кушак пурăннă!

# 130-ти çамрăк шкул

**Тăвай районĕнчи Тăрмăш вăтам шкулĕ кăрлачра 130 çулхи юбилейне паллă турĕ. Астрономсем пек тĕп-тĕрĕс каласан – хавхаллă шкул 1884 çулхи кăрлачăн 16-мĕшĕнче Павел Сидоров çуртĕнче уçăлнă. Пĕрремĕш вĕрентекен – Михаил Семенов (Енĕш Нăрвашран), шкула малтанласа 18 арçын ача çӳренĕ. Хальхи шкул çуртне 1979-1981 çулсенче хута янă. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче кунта 161 ача ăс пухать. Шкул директорĕ – Светлана Владиславовна Николаева.**




Мĕн каласси – республикăра кашни шкул хăйĕн гербĕпе мухтанаймасть. Тăрмăшсен вара унпа пĕлтĕртенпех савăнса пурăнаççĕ те вĕренеççĕ! Чыс-тăмха авторĕ – Михаил



Смолин. Тăрмăш шкулĕн «Олимп ушкăнĕнче»:

– 9 ăсчах – ăслалăх докторĕ, 8 ăслалăх кандидачĕ,

– 5 композитор – мухтавлă Чăваш Енĕн чи çемĕ-юрăллă тăрăхĕ,

– 2 тава тивĕçлĕ артист – ыран-паян ят илмеллисене хальлĕхе асăнмăпăр та,

– 35 тава тивĕçлĕ ĕçчен – вĕсем мĕнле ĕçре-пултарулăхра палăрнине çырса кăтартмăпăр,

– 80 офицер – вĕсенчен 18-шĕ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче пуçне хунă,

– тĕнче класлĕ спорт мастерĕ, 5 спорт мастерĕ, 4 спорт мастерĕн кандидачĕ,

– 180 педагог – вĕрентекенсен пĕчĕк çарĕ!

Çапла вара, тĕнчипе мар пулсан та – республикипе Тăрмăш шкулĕ тахçанах чапа тухнă. Чăваш автономи облаçĕнчен 36 çул, автономи республикинчен 41 çул аслăрах вăл! 130 çул хушшинче иккĕмĕш тăван килте 1448 вĕренекен аттестат илнĕ, вĕсенчен 43-шĕ ылтăн тата кĕмĕл медальсене тивĕçнĕ.

Камсем мĕнле те – Тăрмăшсем уява волейбол ăмăртăвĕпе уçрĕç. Хăй вăхăтĕнче вĕсен команди республика чемпионĕ те пулнă, Раççей тупăшăвĕнче те 4-мĕш вырăн йышăннă. Шкултан вĕренсе тухнисем çамрăклăхне аса илсе мечĕке çунатлантарчĕç. Юбилей çапла пуçланчĕ!



Уява килнĕ сумлă хăнасем тĕлĕнме манса кайманнине тĕрĕслеме пĕрремĕш хутри фойере «Пирĕн ăста алăсем» курав уçăлчĕ. Ăстасен пултарулăхĕпе паллаштараканĕ – С.Семенова. Тутлă апат-çимĕç маçтăрĕсем те тупăшăва тухрĕç. «Тăрмăш хĕрĕсем пек апат пĕçерме пĕлекенсем тата ăçта пур-ши?» – çакăн пек хакларĕç юбилея пухăннисем ас тивлĕ ăмăртăва. Пĕчĕк поварсен пысăк тусне Э.Михайловăна Копенгагенри тĕнчери чи чаплă ята тивĕçнĕ «Noma» ресторана шеф-повара халь тесен халь лартма юрать. Шкул пурнăçĕпе паллаштаракан хăтлавсене (презентацисене) Голливуд блокбастерĕсене пăхнăн куракансем те йышлăн пулчĕç. Хăтлавсене чун кĕртекенĕ – М.Смолин.



Виççĕмĕш хутри фойере вара шкул хăнисем пĕчĕк «вăрçă хирнех» лекрĕç. Тăрмăшра та Робин Гуд çуралма пултарнине сывлăш винтовкинчен тĕл персе çирĕплетсе пачĕç.



Пуç çĕмĕренсем çак вăхăтра истори кабинетĕнче шашкăлла выляса гроссмейстера тухма пултарчĕç. «Снайпер шкулĕн» инструкторĕ те, шашкăлла ушкăнпа харăс выляма вĕрентекен те – В.Афанасьев. Чей-кофесĕр пĕр самант та пурăнма пултараймannисене кабинетсенче чунпа вĕресе тăракан сăйлавçăсем кĕтсе тăчĕç. Уяв мĕнле иртнине тĕрĕслесе тăракан «тухтăрсен» – çамрăк корреспондентсен ушкăнĕ те – О.Александрова ертсе пынипе ырми-канми тăрăшрĕ.



Юбилейĕн 1-мĕш çаврăмĕ шкул музейĕнчи экскурсипе вĕçленчĕ. Хăнасем, шкул ачисемпе вĕрентекенсем курал (акт) залĕнче пуçтарăнчĕç, хаваслă уяв пухăвĕ уçăлчĕ. Çĕр-шывăн тĕрлĕ тăрăхĕнчен кам кăна килмен юратнă шкулăн сумлă та аслă кунне! Пурнăç алăкне яр уçнă иккĕмĕш тăван кил асамлăхĕ çулсем иртнĕçем чăнлăхне ытларах кăтартать, ачалăх-çамрăклăхăн нихăçан та анман, пĕлĕт хыçне пытанман хĕвелĕ пулса тăрать. Юбилейра сăмах илнисем шкулăн чунне вĕрентекенсемпе вĕренекенсем упранине те ăшшăн асăнчĕç, тав турĕç. Шкул коллективĕ пил сăмахĕ каласа пуçтарăннисене чаплăран чаплă концертпа савăнтарчĕ. Юбилей дискотекинче те ватти-вĕтти савăнчĕ.

130 çул пысăкăш уява сума суса «Шкул хыпарçи» хаçатăн юбилей кăларăмне те хатĕрленĕ вĕрентекенсемпе ачасем. Хаçат ярăмĕсенче аслисемпе çамрăксем чуна уçса калаçаççĕ, пултарулăхĕпе паллаштараççĕ.

**«Шкул хыпарçи» юбилей кăларăмĕнчен:**

«Пĕрле вĕреннĕ хĕрсем çине çирĕм çул иртсен пăхатăн та, тĕлĕнетĕн: шкул ачи чух вĕсем илĕртӳллĕн, илемлĕн курăнмастчĕç, халĕ вара Голливуд майрисенчен те хӳхĕмрех, хитререх пулса кайнă. Вăхăт вĕсене илемлетнĕ-ши е хамăр ача-пăча пулнăран хĕр илемне курма пĕлмен-ши. Вăл та, ку та пулĕ...» **(А.Кузнецов)**

«Павлов Григорий Николаевича, Смолин Михаил Антоновича, Григорьева Людмила Германовнăна физикăна ансаттăн ăнлантарнăшăн, Николаева Нина Герасимовнăна кăсăклă опытсемшĕн тавтапуç. Иванов Иван Иванович географăн питĕ лăпкă урокĕсем ăшшăн аса килеççĕ – унăн урокĕсенче эпир чунпа канаттăмăр, кайран вара физкультура урокĕсенче чуна кăларса илетчĕç. Физкультурăпа спорта юратма вĕрентнишĕн Антонов Анатолий Сергеевича, Степанов Николай Петровича, Афанасьев Валерий Ильича пысăк тав. Чăнах та турă панă педагогсем. Ачасене те итлеме пĕлетчĕç, усăллă канашсемпе те пулăшатчĕç. Спортсменсен ăрăвĕсене çитĕнтерчĕç. Пирĕншĕн йĕлтĕр тата волейбол – ĕмĕрлĕхех пурнăç йĕрки». **(Хаваслă та шавлă 10 «б» класра вĕреннисем. 1986 çулта тухнисем.)**

«Тăрмăш шкулĕнчен халĕ кăна – 2013 çулта вĕренсе тухрăм. Темиçе уйăх хушшинчех шкул татах та лайăхланнă. Халăхпа тăрăшса ăна юсанă. Шкула çĕнĕрен çӳрес килет, алăкне уçасчĕ те вĕрентекенсен кăмăллă та ырă сăнĕсене курасчĕ» **(А.Андреев)**

*Эпĕ вĕренетĕп*
*Пиллĕкмĕш класра,*
*«Пиллĕксем» илетĕп*
*Кашни урокра.*
*Киле ĕç параççĕ*
*Пире яланах,*
*Сăвăсем ыйтаççĕ*
*Пиртен час-часах.*
*Юрăсем юрлатпăр*
*Кашни уявра,*
*Савăнса пурнатпăр*
*Эпир яланах!*

***(Г.Федотова, 5 класс)***

***Владимир СТЕПАНОВ.***
**Александр КУЗНЕЦОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕсем.**



# Салтак пурнăçĕ

Калав

Геннадий ЭСЕКЕЛ



(**Малалли. Пуçламăшĕ 4-8-мĕш номерсенче**).

Каçхине «Свадьба в Малиновке» кино куртăмăр. Хохол ачисем савăннипе ухмаха ерменни кăна, хавхаланса та кулса, сăмах хушса çеç ларăççĕ. Курма, итлеме чăрмантараççĕ.

Тепĕр кунне каллех почтăна çитсе килтĕм. Эпĕ таврăннă çĕре Рязань артиллерисчĕсем полигонран таврăннă. Вĕсем пĕлтернĕ тăрăх Рязаньсем чи лайăх паллăпа палăрнă, анчах пемелли территорие юсама, йĕркене кĕртме пире хăвараççĕ имĕш. Ку тата 2-3 куна тăсăлать. Салтаксем ывăннă.

Шарагин подполковник мана хăй патне чĕнчĕ.

– Телеграммăна мĕншĕн ют офицертан парса ятăн? – çилĕпе тулнă пĕчĕк куçĕ мана пăралать.

– Часрах сирĕн пата çитерес терĕм. Тен, хăвăрт таврăнма ыйтнă...

– Санăн мĕн ĕç пур унта? – кăшкăрса шарт! сиктерчĕ мана. – Каллех уçса вуланă!

– Подполковник юлташ, манăн айăп çук унта, – хăрамасăр пăхрăм эпĕ унăн куçĕнчен.

– Виçĕ куна – гауптвахтăна! – команда пачĕ вăл.

– Есть, виçĕ куна гауптвахтăна! – килĕшсе каласа хутăм эпĕ.

Хăйĕн салтакĕсем итлесе тăраççĕ.

– Подполковник юлташ, – чупса çитрĕ лагерь писарĕ Шарагин патне. – Пирĕн пата округран тĕрĕслевпе полковник килет. – Эсир лагерьте званипе чи асли, офицера кирлĕ пек кĕтсе илмелле. Концертпа аванччĕ ĕнтĕ.

– Юрать, – тавăрчĕ Шарагин.

– Кӳршĕри майора асăрхаттармалла манăн. Вĕсем те вăхăтлăха юсав ĕçĕсем тума юлаççĕ...

Концерт номерĕсене «шĕкĕлчеме» тапратрĕç. Эпĕ айккинче вĕсемпе хутшăнмасăр тăратăп. Пилĕк-ултă номер тупрĕç – ташлакансем, сăвă вулакансем, шăпчăк сассипе шăхăракан... Юрлакан çук.

– Юрлакан çук-и сирĕн хушăра? – тĕлĕнсе ыйтрĕ Шарагин, – эп юрлание килĕштеретĕп, уйрăмах салтак юррисене.

– Юрлакан çук, – пат! татрĕç салтаксем, хăйсем ман çине пăхаççĕ.

– Шел, шел, – мăкăртатрĕ аран илтĕнмелле.

– Сержант-санинструктор питĕ лайăх юрлать, – хавхаланса персе ячĕ пĕр салтакĕ. – Апатланнă хыççăн вăрмана уçăлма тухсан вăл юрланине илтрĕм. Питĕ уçă сасăллă юрăç. Итле кăна. Пирĕн баянист пур. Халех хатĕрленме пуçлама та пулать.

– Вăл каçхине гауптвахтăна каять – виçĕ талăка, – тавăрчĕ Шарагин.

Хăй ман çине хаклашакан куçпа пăхать.

– Юрăсăр концерт тивĕçлĕ шайра пулаймасть-çке, – ĕнентересшĕн салтаксем командира.

– Вăл манăн çырупа телеграммăна уçса вуланă, – пат! татрĕ Шарагин.

– Командир юлташ, – сăмах илчĕ пĕр салтакĕ хăюллăн, – сирĕн çырăва лейтенантсем уçса вуланă. Вĕсем кулса калаçнине хам илтрĕм. Тупа тăватăп: ку тĕрĕс.

Подполковник шухăша путрĕ...

– Юрать, юрлатăр, анчах асамлă, чĕрене пырса тивекен юрă пултăр, – килĕшрĕ подполковник. – Концерт пĕтсен унăн пур пĕр гауптвахтăра ларма лекет, – вăл ман çине хаярĕ сӳннĕ куçпа пăхса илчĕ. – Халь кайăр лагерь айккине, репетици ирттерĕр... пирĕн концертпа та малти ретре пулмалла.

Лагерьти пĕчĕк эстрада площадкине салтаксем пухăннă. Вăрăм саксем çине вырнаçнă яшсем концерта пуçлама чăтăмсăррăн хистеççĕ. Ятарласа тунă купол айне Мускавран килнĕ полковникпа Шарагин подполковник вырнаçнă. Вĕрсе хăпартнă пек кӳпшек кӳлепеллĕ, ӳсме юлхавланнă полковникпа хăмла шалчине аса илтерекен Шарагин хĕрсе кайса тем çинчен сăмахлаççĕ.

Концерта Тулăпа Ефремово десантникĕсем пуçларĕç. Номерсем ытла чаплах мар. Хатĕрленме вăхăт çитменни тӳрех курăнать. Салтаксем те ячĕшĕн çеç алă çупаççĕ. Юрă-ташă та сахал.

Кĕçех пирĕн черет çитрĕ. Ташăçăсем «Яблочко» ташласан куракансем «Браво!» та «Бис!» кăшкăрчĕç. Шарагин çисĕм евĕр çиçсе çеç ларать. Мана чи юлашки номерпе хăварнă. Сцена çине тухрăм. «Милая мама» юрă хыççăн «Серая шинель» юрларăм. Тăвăллăн алă çупрĕç. Тепĕр хутчен юрлама ыйтрĕç. Шарагин кулса çеç ларать. «Франци композиторĕн Жорж Бизен «Пертская красавица» оперинчи «Смит серенади»! Йышăнсамăр!» – евитлерĕ конферансье. «На призыв мой тайный и страстный, о, друг, мой прекрасный, выйди на балкон» – тăсрăм юрра. Шарагин подполковник пуç пӳрнине кăтартма пуçларĕ. Полковник курасран темиçе хутчен пуç пӳрнине вăрттăн çĕклесе илчĕ. Пичĕ çинчен кулă каймарĕ. Юрă пĕтсен салтаксем темччен алă çупрĕç. Полковниксем те вĕсенчен юлмарĕç.

Шарагин Мускавран çитнĕ полковника ăсатнă хыççăн пире пурне те пĕрле пуçтарчĕ. Концерт офицера питĕ килĕшнине пĕлтерчĕ. Мана каçарнине пурин умĕнче те алă парсах сăмах каларĕ.

Виçĕ кунран Рязане таврăнтăмăр. Шарагин аслă врача ман пирки ырă сăмах калама ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ.

Эпĕ таврăннă çĕре батальонра улшăну пулса иртнĕ. Вербицкий врач Ленинграда направленипе Çар медицинин академине вĕренме кайнă. Ун вырăнне йышăнакан çук-ха. Тен медицина институтчĕ хыççăн килекен пулĕ? Шухăша путрăм. Халь манăн кашни ыйтупа, батальон тасалăхĕпе отчет пама кунсерен Овчаренко подполковник умне тăмалла. Çынни вăл питĕ хаяр. Рота командирĕсем те унран чĕтресе çеç тăраççĕ. «Лекрĕм танатана», – шухăшлатăп кулянса. Овчаренко подполковник батальона рота командирĕсенчен те иртерех çитсе кĕрет. Батальон вырнаçнă виçĕ хутлă казармăн кашни кĕтесне кĕрсе тĕрĕслесе тухнă хыççăн кăна хăй пӳлĕмне утать. Пӳлĕмĕ виççĕмĕш хутра – çула май пурне те пăскăртса хăварать. Чăт кăна. Эпĕ ротăсенчи дежурнăйсене каçхине, çĕрле казармăна тасаттарма пуçларăм. Унсăрăн ирхине тирпейлеме ĕлкĕреймеççĕ. Малтанхи вăхăтра дежурнăйсем мăкăртатрĕç, анчах кайран ăнланчĕç – усси пурах. Ирхине чупса çӳресе, чĕлхе тăсса кăларнăнах тăрăшмалла мар.

Авăн уйăхĕ çитрĕ. Врач килессин палли те çук. Пĕр-икĕ эрнерен парашютпа сикмешкĕн кайма хатĕрленетпĕр. Парашютсене майласа хутăмăр. Вĕсемсĕр пуçне хăв çине тулли рюкзак, автомат-çĕçĕ, санитар сумки, противогаз çакмалла. Самолетран центнер ытла йывăрăшпа тухса ӳкмелле.

Парашют сарăлсан купол айĕнче çăтмах саманчĕ пуçланать. Чунра ăшă, ырă туйăм хуçаланать. Вĕçен кайăк пек туятăн хăвна – вĕçетĕн... Кăмăл çĕкленĕвĕ хыççăн кайса юрласа яратăн... Ача чухне хурсем, тăрнасем вĕçнине курсан мĕн чухлĕ ăмсанман-ши? Тĕлĕкре те кашниччех вĕçеттĕм. Шел, чăн пурнăçра этеме çунат хушса вĕçмелле çуратман. Хурланаттăм, ăмсанаттăм карталанса та юрласа иртекен вĕçен кайăксене.

Учебкăра пурĕ те тăватă хут çеç сикнĕ. Полкра малашне сикесси нумай пулать, çавă савăнтарать.

ПМПра аслă врач Фролов майор дежурствăра. Вербицкий врач вĕренме кайнăранпа вăл хăйне графикпа дежурствăна нумайрах лартать. Пулăшма мана хăварать.

Эрнерен сикме каймалла. Çĕнĕ призыв килсе çитрĕ. Узбексем. Вĕсемпе кăштах кулăшла самант пулса иртрĕ. Эпĕ санчаçре. Белорус каччи Полищук тем пирки кулкаласа ман пата çитсе тăчĕ.

– Пит хавас эсĕ, – тетĕп. – Сăлтавĕ мĕнре?

Чикан çамрăкĕ пек хура сăнлă белорус каччи тем каласшăн. Куллине сӳнтермесĕр:

– Пĕлетĕн-и, пирĕн штаб патĕнче зебрăсем тăраççĕ, курсан тĕлĕнсе каятăн.

Хăй çаплах сасăпа кулса ярасран аран чăтса тăрать.

– Мĕнле зебрăсем пулччăр, ан аташса тăр, зоопарк пирĕн полка мĕн тума кирлĕ-ши?

– Ĕненмесен хăв кайса кур. Вăл санитарсен çывăрмалли пӳлĕмне кĕрсе çухалчĕ.

Тепĕр самантран пӳлĕмре ахăрса кулма тапратрĕç. Мана шĕвĕртсе хăварасшăн паллах. Манăн çавах полк писарĕ патне кĕрсе тухмалла. Штаб писарĕ Качушкин – чăваш ачи. Кайрăм. Чăн та, штаб умĕнче азиатсен халатне тăхăннă пĕр взвод чухлĕ çамрăк тăрать. Тумĕсене пăхсан аулсенчен пуçтарнăн туйăнать.

Эрне хăвăрт иртсе пырать. Икĕ кунран сикме каймалла. Эпĕ каллех дежурствăра. Фролов майор процедура пӳлĕмĕнче чирлĕ салтаксене йышăнать. Кабинет умĕнче патвар, кĕрнеклĕ, çӳллĕ узбек ачи тăрать. Салтака пӳлĕме чĕнсе кĕртрĕм. Хушамачĕ Лукманов. Хăйне питĕ салху тытать. Чăнах та чирлĕ-ши? Ĕненмелле мар. Пĕр кун маларах çеç ентешĕсемпе тĕрткелешсе тăратчĕç.

– Ну, мĕн ыратать, çамрăк салтак тусăм? – кăсăкланчĕ Фролов врач Лукманов çине пăхса.

– Чĕре сикет манăн, – вырăс сăмахĕсене тĕлĕнмелле пăсса тавăрчĕ салтак. Сылтăм аллине чĕри тĕлне тытрĕ.

– Чĕре сикет? – тĕлĕнчĕ врач алтăр куçне ман еннелле ывăтса. Тути хĕррисем халь камит пуçланать тенĕн кулă кăларчĕç.

– Мĕнле вылянине пĕлме итлесе пăхам-ха. Гимнастеркуна хыв.

Врач фонендоскоп тытса ун патне çывхарчĕ. Салтак хывăнмасть.

– Хывăн, – тепĕр хутчен хушрĕ врач.

– Хывăнмасăрах итлĕр, – тавăрчĕ салтак аран ăнланмалла сăмахсемпе.

– Мĕнле вылять сан чĕрӳ – футболла-и е волейболла-и? – йĕкĕлтесе илчĕ врач, хăй мана куç хĕссе шприцсен шкапĕ енне кăтартрĕ.

– Пĕлместĕп, – пуçне усса тавăрчĕ салтак, – анчах питĕ вылять.

Эпĕ çав вăхăтра шкапран хăлхари сухăра тасатмалли мăн шприц кăларса алла илтĕм.

– Сан чĕрӳ ытла алхасса кайса кăкăрунтан тухса тарма хăтланĕ, çавăнпа ăна укол туса лăплантармалла, – калаçать врач, ман еннелле утнă май.

Салтак мăн шприца курчĕ пулмалла – самантрах алăкран тухса сирпĕнчĕ. Эпир команда панă евĕр харăссăн кулса ятăмăр.

– Вăт, шельмă, чее азиат, пире улталасшăн. Сикме каясшăн мар хăтланать. Куркаланă ун пек «паттăрсене», – пĕтĕмлетрĕ врач самай çилĕллĕ сăнпа. – Эрнерен сикме каймалла-çке?

Каçхине батальона таврăннă чухне куртăм: Лукманов Юлдашевпа тата Хасановпа пĕрле турник патĕнче аппаланаççĕ.

– Лукманов, санчаçрен ма тухса тартăн? Чĕрӳ выляма чаранчĕ-и? – йĕкĕлтерĕм ăна юлташĕсен умĕнче.

Вăтанчĕ пулмалла эп ун пек ыйтнăран, пуçне пĕкрĕ те:

– Шприц курсанах выляма чаранчĕ, – терĕ тап-таса вырăс чĕлхипе.

Уйрăлтăмăр.

Батальонра хозвзвод ачисем хавасланса кĕтсе илчĕç: мана кĕçĕн сержант званийĕ парса чысланă. Батальон писарĕ Романов чи малтан пĕлнĕ пулсан та мана систермен – сюрприз хатĕрленĕ. «Çумалла», – хистеççĕ юлташсем. Ваня Гладкий водитель самантрах кирлине тупса килчĕ. «Отбой» хыççăн каптеркăра звание «çурăмăр». Дежурнăй офицер киличчен краватьсем çине тӳнтĕмĕр. Çывăрттармасть, куç хупăнмасть. Пуçра аса илӳсем калейдоскоп евĕр çаврăнаççĕ. Кăмăл вылянать. Савни сăнĕ куç умĕнчен каймасть. Тунсăх пусса илчĕ. Тата икĕ çул тӳсмелле... Атте-анне мĕн тери хаклă иккен инçетре куç умĕнче пулмасан...

**(Малалли пулать).**

# Хавасла 2014 самант

**Вăйă йĕрки çинчен:** Пушă клеткăсене, стрелкăсем кăтартнă тăрăх, 1-рен пуçласа 8 çитиччен цифрăсем вырнаçтарса тухмалла. Анчах та вĕсем горизонтальпе вертикальте пĕрер хут çеç тĕл пулмалла.



Çак пуç ватмăша шутлас тесен илсе кăтартнă сăмахсем умне тепрер сас палли хушса çĕнĕрен сăмахсем йĕркелемелле. Енчен те йăлтах тĕрĕс пулсан палăртнă йĕркесенче эсир юратнă мультфильмри сăнарсене тупса вулатăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| | У | П | А |
| | Ш | А | К |
| | У | Р | Ă |
| | А | Ч | А |
| | С | А | Н |
| | А | М | А |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | А | Р | И |
| | Т | Ă | М |
| | У | П | А |
| | А | М | А |
| | В | А | Л |
| | А | Н | А |

## Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă



1. Утă купи. 2. Вăрман çырли. 3. Упăте апачĕ. 4. Вăхăтлăх çурт. 5. Сивĕ апат. 6. Сӳпĕлти кайăк. 7. Пĕчĕк кĕреçе. 8. Пылак çĕр улми. 9. Сывлăх сунни. 10. Икĕ вĕçлĕ япала. 11. Вăл телее тупăнать. 12. Тинĕсри чĕр чун. 13. Ун тăрăх шыв юхать. 14. Литература жанрĕ. 15. Пĕвери пулă. 16. Шакла кавир.

## Сăмах каçмăш



**Сылтăмалла:** 7. Çар званийĕ. 8. Чăваш юрăçи. 9. Ăна-кăна чикмелли «хутаç». 10. Вĕçен кайăк. 12. Пӳрт пайĕ. 13. Унта тырă авăртаççĕ. 17. Утă-улăм вырăнĕ. 19. Пушкăрт халăхĕн паттăрĕ – ... Юлаев. 20. Чăваш çыравçи. 21. Чĕр чун. 24. Пушă. 26. Ун çинче апат пĕçереççĕ. 27. Унсăр мунчана каймаççĕ. 30. Шупашкар çумĕнчи юхан шыв. 32. Ĕлĕкхи налук. 33. Атă-пушмак тасатмалли хатĕр. 34. Чăвашсен авалхи турри. 35. Карел халăхĕн кĕвĕ инструменчĕ.

**Аялалла:** 1. Унпа ӳнерçĕ усă курать. 2. Чĕр чун. 3. Ĕлĕкхи «президент». 4. Пахча çимĕç. 5. Чиркӳллĕ ял. 6. Хĕпĕртенӳ. 11. Тарăн çырма. 14. Чиновниксен ушкăнĕ. 15. Кăнтăрти йывăç. 16. Хурт-кăпшанкă. 18. А.Артемьев çыравçăн вилĕмсĕр хайлавĕ. 22. Вăл выртсан мăклансах каять. 23. Пуртă ăсти. 25. Утă-улăм пуçтармалли хатĕр. 28. Сакăр çынран тăракан кĕвĕ ушкăнĕ. 29. Лӳппер. 31. Пăрахут çинчи «карлăк». 33. Вылькăхсен ушкăнĕ.

Хисеплĕ ачасем! Эсир илтнех пулĕ: икĕ мулкач хыççăн хăвалакан пĕрне те тытайман теççĕ... Тĕрĕссипе чăнах та çапла-ши? Эпир вара урăхла меслет шыраса тупрăмăр — пĕрре персех икĕ мулкача йăвантаратпăр. Ăна пурнăçлас тесен пушă ункăсене сăмахсем çеç çырса хумалла. Анчах хăшĕ вырăнлăши? Апла тăк хăтланса пăхăр-ха.

| | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| К | У | Ш | | | | Т | Ă | Ш |
| П | У | С | | | | Ă | Р | У |
| К | Ă | М | | | | П | У | Ç |
| Ч | Ă | Р | | | | М | А | Н |
| К | Ă | Ш | | | | С | А | К |
| К | А | Л | | | | К | У | С |
| Т | У | Р | | | | А | Н | А |
| К | А | Р | | | | К | У | Н |
| С | А | М | | | | Т | Р | И |
| М | У | Х | | | | К | Ă | Н |
| Т | У | Р | | | | С | А | Т |

*Николай КРАСНОВ (Йĕпреç районĕ) хатĕрленĕ.*